Чувашска Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 3
ВЫРСАРНИКУН
№ 25 (8677)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Магнитогорскри И. В. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ металлурги комбинатĕнчи рабочисем, работницăсем, инженерсем, техниксемпе служащисем И. В. Сталин юлташ патне янă çыру (1 стр.).

П. Семенов, В. Слепцов, А. Галкин, Л. Гордеев, П. Митрофанов, Н. Михеев.—Сменăри задание—7 сехетре (1 стр.).

В. Жирнов.—Совет Союзĕнчи ĕççынниçен культурăпа техника шайĕ ÿссе пырать (2 стр.).

С. Селезнев.—Агитаторсем (2 стр.).

КОЛХОЗ ПУРНĂÇĔН ЫЙТĂВĔСЕМ: **А. Викторов.**—Усă курман майсем (3 стр.).

Е. Афанасьев.—Завод чысăшĕн. Очерк (3 стр.).

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ: **Василий Алендей.**—«Çамрăк ăру» (3 стр.).

А. Жирнов.—«Тарас Шевченко» кинофильм çинчен (3 стр.).

Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).

ООН Генеральнăй Ассамблейин ултăмĕш сессийĕ (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Удобренисем ытларах хатĕрлер, вăйлă тырпулшăн кĕрешер!

Тăван çĕршыв халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни çинчен Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни хулапа ял ĕçченĕсене чун-чĕререн савăнтарать, малашне тата та пысăкрах çĕкленÿпе ĕçлеме хавхалантарать. Иртнĕ çул халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсемпе пĕрле социализмлă ялхуçалăхĕ те пысăк çитĕнÿсем турĕ. 1951 çулта çичĕ миллиард та тăватçĕр миллион пăт тĕштырă туса илнĕ. Колхозсемпе совхозсем ĕрчетекен выльăх-чĕрлĕх пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхĕн пысăк пайĕ пулса тăчĕ.

Совет государстви ялхуçалăхне çулсерен хăватлă техника ытларах та ытларах парать. Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕ, вунпилĕк лаша вăйлĕ трактор çине куçарса шутласан, 137 пин трактор, тырпул пуçха кĕртмелли 53 пин комбайн, вăл шутран 29 пин самоходнăй комбайн тата ытти тĕрлĕ машинăсем нумай илчĕ.

Партипе правительство паракан пулăшупа тĕрĕс усă курса, малта пыракан колхозсем обществăллă хуçалăха çултан-çул вăйлатса, колхозниксен пурнăçне лайăхлатнăсемĕн лайăхлатса пыраççĕ. Организацие хуçалăх тĕлĕшĕнчен хăвăрт аталанса пыракан ялхуçалăх артелĕсем мичуринла агробиологи наукин вĕрентнине—курăк акмалли уйлă çĕрĕç системине тĕплĕ пурнăçлаççĕ.

Курăк акмалли уйлă çĕрĕç системине кĕрекен чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри вăл хире удобренисем ытларах кăларасси пулать. Мĕнпур йышши удобренисемпе пĕтĕмĕшпе тата пĕлсе усă курни—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстермелли хăватлă май. Сутçанталăка улăштарса çĕветмелли плана кăтартса панă ĕççене пурнăçланă чухне çĕре тăтăшах удобренисемпе çемçетме кирлине пĕр самантлăха та манмалла мар.

Вăйлă тырпул туса илекен тата йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх усракан колхозсем тĕрлĕ удобренисем хатĕрлесе вĕсене уй-хире кăларассишĕн тимлĕ тăрăшаççĕ. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» ялхуçалăх артелĕ ку енĕпе уйрăмах лайăх тĕслĕх кăтартать. Кунта, сурăхне хатĕрленĕсĕ, уя нушпĕр пин лав ытла тислĕк, ултă пин лав торф, 4.500 лав кушкăн тăпри кăларнă, тислĕкне торфран компост нумай тунă, вырăнти ытти тĕрлĕ удобренисемпе минераллă удобренисем кирлĕ чухлĕ хатĕрлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе вăхăтран вăхăта мар, куллен ĕçлеççĕ, вĕсем агротехникăллă ытти ĕççене те тăрăшса пурнăçлаççĕ.

Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозра ансă районти ялхуçалăх артель председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Колхоз руководителĕсем хастарлă ĕçпе чапа тухнă артелĕн ÿсĕмне тивĕçлипе хакларĕç, унтан вĕренме кирлине палăртрĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхозăн паха енĕсенчен пĕри çакă пулать: вăл çĕрĕç культурине ÿстерсе пырас ĕçре пур йышши удобренисемпе те анлă усă курать, хире темиçе çĕршер тонна минераллă удобренисем кăларать, кунсăр пуçне вырăнти удобренисем нумай хатĕрлет. сăмахран, 1952 çулта уй-хире 60 пин лав тислĕк кăларма палăртнă. Çак плана пурнăçа кĕртес тесе, фермăсенчи, çавăн пекех колхозниксен килĕсенчи тислĕке пĕтĕмпех пуçă çаврăнăшĕнчи уйсене турттараççĕ.

Малта пыракансен опытне пурнăçлас енĕпе Красноармейски районĕнчи Димитров ячĕпе тăракан колхоз тăрăшса ĕçлет. Артель членĕсем кăçал 30 пин тонна торф хатĕрлеме пулнă. Торф кăларнă çĕрте куллен 14—15 лашапа 50 çын ытла ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе кашни уй-хир бригадинчен колхозниксен ушкăнне уйăрнă. Торфа тислĕкпе хутăштарса компост тăваççĕ.

Çакăн пек паха тĕслĕхсем республикăра сахал мар. Ку вăл ан̆ă мĕн çинчен калать: вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿре пур майсем те, çав шутрах удобренисемпе усă курасси те, хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла; мĕнпур колхозсен малта пыракан ялхуçалăх артелĕсем пек ĕçлеме вĕренсе çитмелле; колхоз руководителĕсен обществăллă хуçалăха вăйлатса пырас шутпа пуçарулă, чăн-чăн организаторсем пулмалла.

Паллах, удобренисен, уйрăмах вырăнти удобренисен усăне пĕлмен колхоз руководителĕсем çук ĕнтĕ. Анчах хăшпĕр колхоз руководителĕсем удобренисене ытларах хатĕрлес тĕлĕшпе колхозниксене çителĕклĕ мобилизацилемеççĕ. Тăвай районне илĕпĕр. Январь уйăхĕнче хире тислĕк кăлармалли плана район çурри ытларах кăна пурнăçланă, колхозниксен килĕсенчи колхозсен уй-хирĕсене тислĕк турттарас, çавăн пекех торф кăларас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен, минераллă удобренисем турттарса килме тытăнманпа пĕрех. Хĕллехи агротехника ĕçĕсене япăх пурнăçлани райсовет исполкомĕпе унăн ялхуçалăх пайĕ колхозсене тивĕçлипе ертсе пыманнинчен килет.

Красноармейски районĕнчи чылай колхозсенче, сăмахран, Шупуç ял Советĕнчи «Гвардия», «Большевик», çавăн пекех Ворошилов ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенче уя удобренисем кăлармалли плана çултан-çул тултармаççĕ, çавăнпа та ĕнтĕ вĕсен тырпул тухăçлăхĕ питĕ ерипен ÿсет. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесен, кашни гектар çине 20—40 тонна тислĕк кăлармалла пулсан, Красноармейски районĕнчи «Досаево» колхоз пĕлтĕр мĕн пурĕ те 0,3-шер тонна çеç кăларнă. Паллă ĕнтĕ, агротехникăна пурнăçласси çине çакăн пек пăхсан, тырпул тухăçлăхне ÿстерме çук.

Çĕмĕрле, Куславкка, Кувакино районĕсенче удобренисем хатĕрлес ĕçе питĕ çителĕксĕр йĕркеленĕ. Вĕсем хĕллехи вăхăтра уй-хире тислĕк кăлармалли плана 5 процентран, пуçласа 19 процента çити анчах тултарнă, минераллă удобренисем кÿрсе килессине тивĕçлипе йĕркелемен. Çав районсенчи ялхуçалăх пайĕсем тата вĕсен специалисчĕсем çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăнаççĕ, вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿне пуçарса ертсе пымаççĕ.

Удобренисем кирли пакалăй май çак мăшăна пакса кăлармалла: пирĕн республикăри нумай колхозсен тăприсем йÿçĕклĕ. Йÿçĕк вăл ÿсентăрансене аталанма, тырпул тухăçлăхне ÿстерме чăрмантарать, клевера илес пулсан, вăл çавăн пек тăпра çине аксан пĕтет. Тăпрари йÿçĕке пĕтерме çĕре извеçлемелле. Çĕре извеçлес ĕçе республикăри нумай колхозсенче ку таранччен хаклаççĕ. Кăçал ку енĕпе татăклă улшăну тумалла. Çĕре извеçлесем нумай çул ÿсекен курăксен тухăçлăвĕ чылай хăпарать, кайран акакан культурăсем те вăйлă пулаççĕ.

1952 çул валли производство планĕ тунă чухне кашни колхозăн удобренисемпе тĕрĕс усă курасси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла, уй-хир бригадисене тата фермăсене паракан производство заданийĕсенче вырăнти, çавăн пекех ытти удобренисем мĕн чухлĕ хатĕрлемеллине тĕплĕ палăртмалла. Симĕс удобрени валли люпин акасси çинчен те шухăшлаcа пăхмалла.

Удобренисем хатĕрлессишĕн тăрăшни—пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешни. Кашни колхозăн, мĕнпур ялхуçалăх специалисчĕсен тивĕçĕ—курăксем акмалли уйлă пуçă çаврăнăшĕсене йĕркелесе, уй-хире çулсерен удобренисем ытларах кăларса тăмалла тăвасси пулать.

Партипе правительство республика ялхуçалăхĕ умне пысăк задачăсем лартрĕç: тырпул тухăçлăхне тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне татăклăн ÿстермелле. Çав задачăсене пурнăçа анăçлă кĕртесси хĕллехи агротехникăллă ĕçсен планне пĕтĕмĕшпех тултарнинчен, кирлĕ чухлĕ удобренисем хатĕрленинчен нумай килет. Ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сен тата колхоз руководителĕсен удобренисем хатĕрлес енĕпе халĕ пиçсанхинчен те тăрăшарах ĕçлемелле.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сем КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1952 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 31-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

МТС-сем	Плана тултарнă	МТС-сем	Плана тултарнă
1. Шăмăршă	76,5	17. Хĕрлĕ Чутай	45,4
2. Пăрачкав	72,5	18. Тăвай	44,6
3. Советски	65,2	19. Вăрнар	44,2
4. Улатăр	62,2	20. Октябрьски	43,9
5. Сурмайдан	56,4	21. Муркаш	42,8
6. Элĕк	55,8	22. Куславкка	42,5
7. Çĕмĕрле	54,5	23. Йĕпреç	42,5
8. Сĕнтĕр	53,5	24. Сиява	41,9
9. Чкаловски	50,9	25. Калинино	41,8
10. Комсомольски	50,0	26. Канаш	41,3
11. Шăхасан	50,0	27. Çĕрпÿ	40,4
12. Красноармейски	48,9	28. Шупашкар	40,0
13. Ишлей	48,5	29. Первомайски	38,6
14. Вăрмар	47,9	30. Етĕрне	37,8
15. Кувакино	46,5	31. Сĕнтĕрвăрри	37,0
16. Елчĕк	46,5	32. Чурачăк	35,9

Магнитогорскри И. В. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ металлурги комбинатĕнчи рабочисенчен, работницăсенчен, инженерсенчен, техниксемпе служащисенчен

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председательне

Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи рабочисем, работницăсем, инженерсем, техниксем, служащисем комбинат 20 çул тултарнă кун Сире, совет халăхĕн çĕнтерĕвĕсене хавхалантаракан организаторна, коммунизмăн гениллĕ зодчийне, пĕтĕм тĕнчери мир ялавне çÿлте тытса пыракана хĕрÿллĕ салам яратпăр.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Эсир ăсласа çул кăтартса пынипе совет халăхĕ коммунизм тăвас ĕçре чаплă çитĕнÿсем турĕ.

Эсир гениллĕ шутласа хунипе пĕтĕм совет халăхĕ паттăррăн тăрăшнипе тунă Магнитогорскри металлурги комбиначĕ 20 çул хушшинче çĕршывăн чи хăватлă тата техникăпа питĕ лайăх пуян металлурги предприятийĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Пирĕн комбинат-гигант аталанса пыни историйĕ сталинла ăслă идейăсем, хамăр çĕршыва индустрилемелли тата совет металлургине аталантармалли идейăсем ăнăçлă пурнăçланса пынине лайăх кăтартса парать.

Парти организацийĕ ертсе пынипе Магнитогорскри комбинатра ĕçе лайăх пĕлекен çирĕп кадрсем ÿсе çитĕнчĕç. Вĕсем партипе правительство лартнă кирек мĕнле задачăсене те пурнăçлама пултараççĕ. Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче Магнитогорскри металлургсен коллективĕ партипе правительство çĕршыва халăх хуçалăхĕ валли металл кăларасси тĕлĕшпе панă заданисене анăçлă пурнăçласа пычĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Сталинла Магнитка социализмлă çĕршывăн кĕрешÿллĕ вăйĕсен хăватлă арсеналĕ пулса тăчĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çĕнтерÿллĕ вĕçленнĕ хыççăн Магнитогорскри металлургсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, халăх хуçалăхне ăсталла тата хăвăрт аталантармалли сталинла пĕрремĕш пилĕк çуллăх плана пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç. Вăрçă хыççăнхи пилĕк çуллăх плана срокчен тултарса, пирĕн комбинат коллективĕ планран иртерсе металл нумай туса кăларчĕ. 1951 çулта, Сире, Сталин юлташ, хамăр панă обязательствăсене тултарса, комбинат планран иртерсе 213 пин тонна чугун, 73 пин тонна хурçă, 36 пин тонна прокат туса кăларчĕ, Чĕрсырьена, материалсене, энергие тата ытти пурлăхсене перекетлесе Магнитогорскри металлургсем çĕршыва 18 миллион тенкĕ ытла планран иртерсе укçа перекетлесе пачĕç. Магнитка строителĕсем планран иртерсе пурăнмалли çуртсен 11.200 тăваткăл метр лаптăк чухлĕ турĕç. Магнитогорецсем коммунизмăн аслă стройкисен заказĕсене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ.

Комбинатра стахановецсем, производство новаторĕсен паха патрĕсем ÿсе çитĕнчĕç, вĕсем малта пыракан техникăпа усă курса ĕçлеме вĕренсе çитрĕç, домнă кăмакисене, мартен кăмакисене тата прокат станĕсене тĕнчере нихăçанхинчен те лайăхрах усă кураççĕ. Вĕсем хушшинче çĕршыври чаплă сталевар, Сталинла премии лауреачĕ Мухамет Зайнуров, мартен цехĕн аслă мастерĕ, РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Лупинов юлташ, блюмингăн аслă операторĕ, Сталинла премии лауреачĕ Тищенко юлташ, домна кăмакисен мастерĕсем Шаталин, Переверзев, Овсянников, Орлов юлташсем, çамрăк сталеварсем, Сталинла премии лауреачĕсем Владимир Захарова Иван Семенов тата ытти юлташсем. Чи лайăх стахановецсем, производство новаторĕсен ĕçсенче ĕç çине чăннипех те çĕнĕлле, коммунистла пăхни уçăмлăн палăрать.

Хаклă Сталин юлташ! Магнитогорецсем Эсир совет халăхĕн тата унăн малта пыракан отрячĕн—металлургсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăвас атте пек тăрăшнине лайăх туйрĕç. Комбинатпа пĕрле Магнит çĕрĕ çинче хĕсне вăхăт хушшинче социализмла çĕнĕ хула, пирĕн сталинла самана тивĕçлĕ хула ÿсе ларчĕ. Пурăнмалли çурт-йĕрсем лартассипе культура строительстви уйрăмах вăрçă хыççăнхи çулсенче питĕ анлă саралчĕ. Магнитогорецсем пысăкшăн çывăрăнчи хулара нумай хутлă илемлĕ те лайăх çуртсене, илемлĕ Урал сене тивĕçлипех хуттанса хавасланаççĕ.

Эсир пирĕншĕн лайăх халăх тăрăшнипе хавхаланса, Эпир малашне те комбинатăн ĕçне кутсăсне пысăклатса пырăпăр. Эсир, хаклă Иосиф Виссарионович, пирĕн кăларусене, инкăкăлланасси тата лăпланса ларассăн совет çыннисене тивĕçлĕ мар тесе калани эпир лайăх астăватпăр. Пирĕн комбинат ĕçĕнче халĕ те çитменлĕхсем нумай-ха. Металл нумайрах туса кăларма, унăн пахалăхне лайăхлатма тата хăйне ларакан хакне йÿнетме май паракан резервсене пĕтĕмпех усса палăртман, усă курма тытăнман резервсем пур-ха. Эпир Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, социализмла ăмăртса ĕçлессине анлă саранипе, производство новаторĕсен опытне пурнăçа кĕртнипе пур çитменлĕхсене те пĕтерме, халиччен усă курман резервсемпе туллин усă курма, производствăри усăсăр тăкаксене пĕтерме сăмах паратпăр.

Большевикла критикăпа самокритикăна вăйлатса, хамăрăн ĕçри ответлăха ÿстерсе, калрсене ĕçри çитменлĕхсене тÿссе тăрас мар шухăшлă пулма воспитани парса, эпир комбинатăн пур уйрăмĕсен ĕçĕсене те лайăхлатса пыма тăрăшăпăр.

Хаклă Иосиф Виссарионович! Эпир Сире малашне те пирĕн комбинат, сирĕн мухтавлă ята панă комбинат, хура металлурги предприятисем хушшинче малта пыракан завод пулса тăтăр тесе çине тăрса кĕрешме сăмах паратпăр.

Хамăр умра тăракан задачăсем çинчен сÿтсе явса тата хамăрăн майсене шута илсе, эпир çакăн пек социализмлă обязательство илетпĕр:

1. 1952 çулти плана срокчен тултарма тата планран иртерсе 60 пин тонна чугун, 55 пин тонна хурçă, 25 пин тонна прокат, 30 пин тонна кокс, 150 пин тонна тимĕр тăпри хатĕрлеме пулатпăр.

2. Тĕп агрегатсемпе усă курассине лайăхлатма тата домна кăмакисемпе лайăхрах усă курас ĕçе пурнăçлама, мартен кăмакисен тĕпĕн кашни тăваткăл метрĕ çинче хурçă нумайрах шăратса кăларма, прокат станĕсем хĕрÿ ĕçленĕ сехетри ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулатпăр.

3. Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 3 процент таран иртерсе тултаратпăр.

4. Продукци пахалăхне лайăхлатнипе тата чĕрсырье, материалсен, энерги тата ытти пурлăхсене расходламалли нормăсене малалла чакарса пынипе продукцин хăйне ларакан хакне чакарса, планран иртерсе 10 миллион тенкĕ укçа перекетлеме пулатпăр.

5. Çĕнĕ техникăна анлăн пурнăçа кĕртсе пынипе тата тепĕр домна кăмакине çĕнĕ йĕрке тăрăх ĕçлеме куçаратпăр. Çичĕ мартен кăмакинче вĕри тытăнса тăмалли своден туса, производствăна рационализацилес тата йывăр ĕççене механизацилес енĕпе техникăллă ĕççене чылай пурнăçлама пулатпăр.

6. Пурăнмалли çурт-йĕрсем 40 пин тăваткăл метр лаптăклăх тата уйрăм çынсен 250 çуртне туса пĕтерсе ĕçе яратпăр.

7. Производствăри усăсăр тăкаксене пĕтерессишĕн тата резервсемпе туллин усă курассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарма, ĕçре малти вырăнта тăракан меслетсене пурнăçласа пыма, ĕç пахалăхне лайăхлатасси, производство культурине ÿстересси тата кашни агрегата пĕр тикĕс ĕçлесе пыракан тăвасси çине уйрăмах тимлĕ пăхатпăр.

Социализмлă обязательствăсем илсе, эпир пирĕн аслă çĕршывăри металлурги промышленноçĕнчи мĕнпур рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене 1952 çулта металл туса кăлармалли плана срокчен тултарассишĕн, металлурги агрегачĕсемпе механизмсен хăвачĕсемпе туллин усă курассишĕн, метала хăвăрт шăратмалли меслетсемпе усă курассишĕн, металл пахалăхне лайăхлатассишĕн, металăн хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн, производствăри тăкаксене чакарса пырассишĕн, металлургие тата ытларах вăйлатассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва анлă сарма чĕнетпĕр.

Хаклă Иосиф Виссарионович! Сталин ячĕпе тăракан комбинатри рабочисем, инженерсем, техниксемпе служащисем — металлургсен нумай пин çынлă пĕтĕм коллективĕ партипе правительствăн кирек мĕнле заданине те пурнăçлама хатĕр. Çакна пурнăçлассине шанса тăма эпир социализмлă Тăван çĕршыва, большевиксен партине тата Сире, юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре, Сталин юлташ, чĕререн парăнса тăни май парать.

Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, совет халăхĕн тата прогрессивнăй пĕтĕм этемлĕхĕн телейĕшĕн сывлăхлă пурăнма тата нумайччен пурăнма пĕтĕм чĕререн ырă сунатпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă Совет Тăван çĕршывĕ—Пĕтĕм тĕнчери мирĕн иккам аркатайми тĕрекĕ!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ—пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсен хавхалантаракан̆ĕпе организаторĕ!

Сывă пултăр совет халăхĕн аслă çулпуçĕ—пирĕн юратнă тата тăван Сталин юлташ!

Магнитогорскри И. В. Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи рабочисен, работницăсен, мастерсен, инженерсен, техниксемпе служащисен цехри пухăвĕсенче тата пĕтĕм заводри митингра сÿтсе явса йышăннă.

Сменăри задание—7 сехетре!

Пирĕн Тăван çĕршыв кунтан-кун пуянланса тата тĕрекленсе пырать, совет халăхĕн пурнăçĕ лайăхланать. Партипе правительство тăрăшнипе халăх хуçалăхĕ çĕнĕ техникăпа кĕрпăнталланчĕ, ăна пула совет çыннисен ĕçĕ çăмăллланнăçемĕн çăмăлланса пырать.

Канашри вагонсем юсакан заводра хăватлă оборудовани, механизмсем ĕçлеççĕ. Вĕсем пире ĕç тухăçлăхне ÿстерме, ĕçре çăмăллатма май параççĕ.

Тăван правительство, парти тата Сталин юлташ пирĕншĕн, совет рабочийĕсемшĕн тăрăшни пире ĕçре çĕнĕ ÿсĕмсем тума хавхалантарать.

Техникăпа туллин усă курас, продукци ытларах туса кăларас тесе эпир, тимĕрçĕ цехĕнчи тимĕрçĕсемпе электросварщиксем, мăлатуксемпе, кăмакасемпе тата ытти ĕç хатĕрĕсемпе мĕнле ĕçленине тишкерсе тухрăмăр. Пире çакă паллă пулчĕ: материалсемпе детальсем хăшпĕр чухне çитменнипе оборудованипе сменăри 8 сехет хушшинче туллин усă курмаççĕ. Опыт çакна кăтартса парать: оборудованине тухăçлă ĕçлеттерсен, сменăри сакăр сехетри задание куллен çичĕ сехетре е хăвăртрах та тултарма пулать.

Январь уйăхĕнче, мастерсемпе канашласа пăхнă хыççăн, эпир сменăри задание куллен-кун çичĕ сехетре пурнăçласа пыма, сакăрмĕш сехетре вара нормăран иртерсе продукци туса кăларма йышăнтăмăр, цехри тата заводри рабочисене сменăри задание нормăра палăртнинчен хăвăртрах тултарассишĕн кĕрешме чĕнсе каларăмăр. Çав вăхăтрах эпир цех руководителĕсем умне çакăн пек ыйту тăратрăмăр: производство участокĕсене материалсем, инструментсем, топливо, электроэнерги çителĕклĕ тата вăхăтра парса тăма сĕнтĕмĕр.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсем (сулахайран сылтăмалла) П. Митрофанов, Н. Михеев, В. Слепцов, Л. Гордеев, А. Галкин юлташсем. С. ТРОФИМОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Пирĕн пуçарăва заводра пурте ырларĕç. Халĕ тимĕрçĕ цехĕнче ĕç вырăнне йĕркелесси, материалсемпе детальсем хатĕрлесси, оборудование сыхласси çине тимлĕрех пăхаççĕ. Çакăн пек йĕрке тунă: пĕр сменăра ĕçлекен рабочисем тепĕр сменăри рабочисем метала хĕрсе çитессе е материалсем пырса парасса кĕтсе тăмалла ан пултăр тесе ĕç вырăнне хатĕрлесе хураççĕ. Тимĕрçĕсем ĕçрен кайиччен кăмакасене шлакран тасатаççĕ, металл хĕртме хураççĕ. Çапла туни тепĕр сменăна пынă рабочисене тÿрех детальсем туса хатĕрлеме тытăнма май парать. Кунсăр пуçне кашни рабочи хăй ĕç вырăнне çÿпçапран, ĕçлеме кансĕрлекен япаласенчен тасатать, юлташне мăлатук мĕнле ĕçлени çинчен калаcа парать, сменăра ĕçлеме материал, çĕр кăмрăкĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хурать.

Электросварщиксем аппаратсене юсавлă тытаççĕ, ĕç вырăнне тасатаççĕ, тепĕр сменăри рабочисем валли детальсем çителĕклĕ хатĕрлесе хураççĕ.

Ĕçе çавăн пек йĕркеленĕ çĕрте мастер ролĕ уйрăмах ÿсет. Мастерăн тимĕрçĕсем тата электросварщиксем çитес сменăра мĕнле детальсем тата мĕн чухлĕ туса кăлармаллине, оборудовани пахалăхне тата ыттине те пĕлсе тăмалла. Унăн сменăри рабочисене ĕç пуçлансан малтанхи минутранах тухăçлă ĕçлеме лайăх условисем туса памалла. Тимĕрçĕ бригадисен пĕр тикĕс, килĕштерсе ĕçлемелле, пĕр-пĕрне пулăшмалла.

Эпир сменăри задание çичĕ е ултă сехетре тултаратпăр, смена вĕçленичченех вара планран иртерсе продукци туса кăларатпăр. Январĕн 17-мĕшĕнче Слепцов юлташ сменăри задание пилĕк сехетре тултарчĕ, заданирен иртерсе 22 деталь туса хатĕрлерĕ. Январĕн 18-мĕшĕнче Семенов юлташ заданирен иртерсе 50 деталь турĕ. Çавăн пекех ытти тимĕрçĕсемпе электросварщиксем те ĕç нормине куллен чылай иртерсе тултараççĕ.

Пирĕн шухăшпа, ĕçе тĕрĕс йĕркелесен, техникăпа лайăх вĕренсе çитсен нумай рабочисем сменăри задание çичĕ сехетре тултарма, смена вĕçленичченех вара планран иртерсе продукци туса кăларма пултараççĕ.

П. СЕМЕНОВ, В. СЛЕПЦОВ, А. ГАЛКИН, Л. ГОРДЕЕВ тимĕрçĕсем, **П. МИТРОФАНОВ, Н. МИХЕЕВ** электросварщиксем.

АГИТАТОРСЕМ

Агитатор-коммунист И. Иванов юлташ ӗҫрен таврӑннӑ хыҫҫӑн, каҫсерен, паянхи кунӑн итогне тӑвать те дневникӗ ҫине хӑйӗн шухӑшӗсене ҫырса хурать. Ҫӗршывра тӗлӗнмелле пысӑк ӳсӗмсем пулаҫҫӗ-и, тӗнчери лару-тӑру пирки кӑмӑллӑ е кӑмӑлсӑр хыпарсем пур-и, ялти колхозниксенчен кам та пулин чӗрене савӑнтармалла ӗҫленӗ-и—пурне те паллӑ туса хурать.

Ҫӗнӗ хаҫата вуласа тухсан, вӑл ҫапла ҫырчӗ:

«Паянхи хаҫатсенче чуна хӗпӗртеттерекен хыпарсем пичетленнӗ. СССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Центральнӑй Статистика Управленийӗ иртнӗ ҫулӑн итогӗсене пӗлтернӗ. Манӑн ыран колхозниксене Тӑван ҫӗршыв 1951 ҫулта халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли государство планне ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлани ҫинчен каламалла».

Ирхине И. Иванов хаҫата каллех пӑхса тухрӗ.

Ҫак вӑхӑтра чӳрече умӗпе ҫынсем иртни курӑнчӗ. Уява тухнӑ колонна пек харӑссӑн утса хумханса пырать ҫынсен ушкӑнӗ. Хулпуҫҫисем ҫинче кӗреҫесем. Темӗн ҫинчен питӗ шавласа калаҫаҫҫӗ вӗсем.

— Авӑ, камсем патне каймалла манӑн паян!

И. Иванов колхозниксем юр тытнӑ ҫӗре ҫитрӗ.

— Хыпар итлеме! Хыпар килнӗ? — янӑрарӗ уҫӑ сасӑ.—Илья пичче ҫӗнӗ хаҫат илсе килнӗ.

Ҫеп-ҫемҫе мамӑк пек юр тӑкӑнкалать. Ӑшӑ та тӳлек, хӗлле пек те мар.

— Промышленность ҫулталӑкри плана ирттерсе тултарнӑ,—ӑнлантарать агитатор.

Хыпарсем чӑнах та савӑнтараҫҫӗ. Ун ҫинчен колхозниксем хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене каласа пачӗҫ.

— Плана ирттерсе тултарни куҫ умӗнчех ӗнтӗ,—тет ватӑ колхозник Тимофей Петров.—Нумаях пулмасть-ха эпир ҫӑм тата пурҫӑн пир-авӑрсем, кӗпе-тумтирсем, атӑ-пушмаксем ҫитменнипе аптӑраттӑмӑр. Халӗ авӑ, хамӑр лавкканах кай-ха—ҫӳлӗксем авӑнаҫҫӗ таварсемпе!

— Авӑ, эпӗ Нина патне Шупашкара кайса килтӗм. Тӗлӗнсе каймалла!..,—терӗ тепӗр колхозник Семен Николаев.

Семен Николаев хӗрне пир-авӑр комбинатне ӗҫлеме кайма сӗннӗ. Малтан комбинат строительствинче ӗҫленӗ, халӗ тӗртекен цехра хисеплӗ рабочи шутланать.

— Нинасем те планран ирттерсе тултарнӑ. Преми панӑ...

И. Иванов хӑй пуҫарнӑ сӑмаха итогларӗ.

— Ҫак ҫитӗнӳсем халӑх хуҫалӑх ӗҫне ҫӗнӗ техника анлӑн кӗрсе пынинчен нумай килеҫҫӗ. Капиталистсем, авӑ, пӗтӗм хуҫалӑхне ҫынсене вӗлерме майлаштарса пыраҫҫӗ, унти халӑх куллен-кун чухӑнланса, хӑрса, кӗлмӗҫе тухса пырать. Хуҫалӑх унта халӑх аллинче мар, хуҫалӑха уйрӑм ҫынсем тытса тӑраҫҫӗ.

Агитатор пысӑк гидротехнически сооруженисем тунӑ ҫӗрти йывӑр ӗҫсене механизацилеме хӑватлӑ землесоснӑй снарядсем, землечерпалкӑсем, утакан экскаваторсем, ҫирӗм пилӗкшер тоннӑллӑ грузовой автомобильсем туса кӑларнипе пӗрлех ялхуҫалӑхӗ валли тӗрлӗ йышши пысӑк машинӑсем туни ҫинчен те нумай каларӗ.

* * *

Февраль. Анчах фермӑсенче, хӗл пулин те, пӳртри пек ӑшӑ. Ҫамрӑк выльӑхсем валли ятарласа тунӑ витесене ӑшӑтсах тӑраҫҫӗ. Фермӑра ӗҫлекен Нюра, Августина, Раиса сӗтел тавра пухӑнса ларнӑ та «Ҫамрӑк пӑрусене пӑхса ӳстересси» ятлӑ кӗнеке вулаҫҫӗ.

— Манран ыйтать ӗнтӗ паян. Кӗнекине вуласа та тухаймарӑм,—тет Раиса.

— Эсӗ ӑна «Мӑкла пуҫа» мӗнле пӑхни ҫинчен каласа пар. Чӗчӗ ӗмеймен пӑрусене ӗмӗртсе ҫӳресе шӗвӗр пӳрнӳсӗр кӑштах тӑрса юлманнине кала...

— Вӗренме каймалла, хӗрсем!—терӗ фермӑсен заведующийӗ Степан Смирнов.

Маленков ячӗпе тӑракан колхозри выльӑх-чӗрлӗх енӗпе ӗҫлекенсене участокри агроном Никита Шумилов вӗрентет. Занятисене 50 ҫын таттисӗр ҫӳрет. Ытларикунпа эрнекун пӗрлешнӗ колхозри пилӗк ялтан кунта учебниксем, тетрадьсем, карандашсем йӑтнӑ колхозниксем пухӑнаҫҫӗ.

Анчах занятинче паян Н. Шумилов иланхи пек сӗт мӗнле турӑхланни ҫинчен те, силоса мӗнле ҫитермеллине те, концентратсем пирки те каламарӗ.

— Эпӗ сире СССР халӑх хуҫалӑхӗн ҫулталӑкри итогӗ ҫинчен каласа парам. Эсир вара выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗнче хӑвӑр мӗнле ӳсӗмсем туни пирки калӑр. Ку пирӗншӗн семинарлӑ занятиех пулӗ,—терӗ те вӑл, Статуправлени пӗлтерӗвӗн тӑваттӑмӗш пайӗ ҫинчен ӑнлантарма пуҫларӗ.

Никита Шумилов 1951 ҫулта социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ ҫӗрҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре, ҫавӑн пекех колхозсене организацилле хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетес тӗлӗшпе нумай-нумай ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем туни ҫинчен каласа пачӗ. Калать, калать те диаграммӑсем, фотоӳкерчӗксем кӑтартать.

Диаграммӑсем 1951 ҫулта 7 миллиард та 400 миллион пӑт тӗштырӑ илнине, мӗнпур выльӑх-чӗрлӗх йышӗ 14 процента яхӑн ӳснине тата ытти ҫитӗнӳсене те кӑтартса параҫҫӗ.

— СССР халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли 1951 ҫулхи государство планне ӑнӑҫлӑн тултарас ӗҫре пирӗн ӗнесем пӑхакансен тӑрӑшӑвӗ те пурах ӗнтӗ,—тет Максим Борисов.—Акӑ колхоз иртнӗ ытларикун манӑн хӗре, ҫирӗм пилӗк ӗнерен ҫирӗм пилӗк пӑру илсе таса та сывӑ пӑхса ӳстернӗшӗн ултӑ уйӑхри пӑру леҫсе пачӗ, ӗҫкунӗсем хушса тӳлерӗ. Ҫирӗм пилӗк пӑрӑва пӗрешкел тӗреклӗ, тутӑ, сывӑ ҫитӗнтерсе усрасси пӗчӗк ӗҫ мар.

Эпӗ хам чӑхсем пӑхатӑп. Ҫӑмартасен шутне иртнӗ ҫулта колхоз, чӑнах та, тултараймарӗ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен вӗсене хушнӑ пек пӑхаймарӑмӑр. Эпир чӑхсене сӗлӗ е урпа пӗҫерсе пама ҫеҫ пӗлнӗ, анчах ҫав апатсене ҫӗртекен известка, кӗлейче ванчӑкӗ, чулсем, шапа хуравӗ ҫӑнӑхӗсем парасси ҫинчен аса илмен. Кӑҫал эпир вӑл йӑнӑшсене шута илӗпӗр.—тет Максим Борисов.

* * *

Конюхсем патӗнче Статуправлени пӗлтерӗвӗ ҫинчен колхоз председателӗ Т. Федоров юлташ пӗлтерет. Колхоза вӑл 14-мӗш ҫул ертсе пырать. Вунтӑватӑ ҫул хушшинче ял сӑнӗ нумай улшӑннӑ. Колхозсем тӑвиччен кунта, хурал пӳрчӗсӗр пуҫне, нимӗнле обществӑллӑ ҫурт та пулман. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса пыма икӗ жнейкӑпа пӗр триер тата ҫирӗме яхӑн плуг кӑна пулнӑ. Урӑх чӑн та нимӗн те пулман. Колхоз хуҫалӑхӗ ҫултан-ҫул тӗрекленсе пыни СССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Статистика Управленийӗ пӗлтернине сӳтсе явнӑ хушӑра пушшех уҫӑмлӑраххӑн куҫ умне тухса тӑчӗ.

— Ялхуҫалӑхӗ техникӑпа пуянланса пыни колхозсене ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тата ытларах механизацилеме май пачӗ. Кӑна эпир хамӑр колхозра та аван куратпӑр. Иртнӗ ҫулта МТС пирӗн колхозӑн пӗтӗм уй-хир ӗҫӗсенчен вӑҫӗ пайран икӗ пайне тунӑ, сухаласа акма, авӑн ҫапма пулӑшнӑ. Хамӑр хуҫалӑха механизацилес тӗлӗшпе двигатель лартрӑмӑр, унпа усӑ курса авӑн ҫапас ӗҫре икӗ молотилка хӑрӑс ӗҫлеттертӗмӗр, нумай машинӑсем туянтӑмӑр.

— Ҫакна шутласан,—тет Тимофей Федоров,—пирӗн лашасен вӑйӗпе усӑ курас ӗҫсем чылай сахалланнӑ пек туйӑнать. Апла пулсан, лашасем халран кайни, вӗсен хисепӗ чакни пулмалла мар пек. Анчах мӗн куратпӑр-ха эпир иртнӗ 1951 ҫулта?

— Чӑнах та, мӗн куратпӑр-ха?—ку ыйту пурин пуҫне те пырса кӗчӗ, иртнӗ ҫулхи ҫитменлӗхсене айӑн-ҫийӗн ҫавӑрттарса куҫ умне илсе тухма пулӑшрӗ.

Маленков ячӗпе тӑракан колхоз 1951 ҫулта ҫамрӑк тихасем пӑхса ӳстермелли плана начар пурнӑҫланӑ. Мӗншӗн?

— Пирӗн ку ӗҫре обезличка пур. Эпир кӗрсесене лайӑх пӑхма, вӗсен сывлӑхне упрама пӗлместпӗр. Ездовойсем хушшинче начар ӗҫлетпӗр. Ездовойсенчен хӑшпӗрисем лашасем ҫине чунсӑррӑн пӑхаҫҫӗ.

Ку ыйтӑва парторганизаци те, правлени ларӑвӗ те пӑхса тухнӑ. Халӗ вара конюхсем парторганизаци кӑтартӑвӗсене ҫирӗп пӑхӑнаҫҫӗ.

— Кӑҫал иртнӗ ҫулхи пек пулмӗ!

* * *

Культура строительстви, сывлӑх ӗҫӗ, благоустройство ыйтӑвӗсем агитаторсене нумай интереслентерчӗҫ. Статуправлени пӗлтерӗвне ялти интеллигенци хушшинче сӳтсе явма пуҫламӑш шкул заведующийне А. Степанова юлташа хушнӑ.

— 1951 ҫулта социализмлӑ культурӑн мӗнпур облаҫӗсенче малалла ҫитӗнӳсем туса пынӑ. Вӗренекенсен йышӗ иртнӗ ҫулта 57 миллион пулнӑ, шкулсен хисепӗ ӳснӗ, библиотекӑсем нумайланнӑ, халӑх сывлӑхне упрас ӗҫ лайӑхланнӑ. Ҫакӑ пирӗн ял пурнӑҫӗнче палӑрать-и-ха?—тет А. Степанова юлташ.

Ҫӗршывра ку тӗлӗшпе улшӑнусем пулнӑ пулсан, Маленков ячӗпе тӑракан колхоза ку тӗкӗнмесӗр иртме пултарайман. Ялта вӗренме ҫул ҫитнӗ мӗнпур ачана шкула явӑҫтарнӑ, 13 ача вӑтам шкула ҫӳрет. Колхоз шкула шефа илнӗ, укҫа-тенкӗ нумай расходламасӑрах ӑна вутӑ кӳрсе, юсаса парать. Кино кашни икӗ эрнерех пулать. Чылай ҫынсем радио кӗртнӗ, хаҫатсӑр кил ҫук. Колхозри художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗ вӑйлӑ ӗҫлет.

— Ҫапах та пурте мар-ха, — тет Н. Бычков юлташ.—СССР халӑх хуҫалӑхӗ мӗнле хӑвӑрт ӳссе аталанса пынине кӑтартакан хыпара итленӗ хыҫҫӑн, ман шутпа, ку ӗҫре эпир хамӑр начартарах ӗҫленине те асӑнмалла. Пирӗн ҫитес ҫул хамӑрӑн ял сӑнне лайӑхлатас, колхоза электричество вӑйӗ парас, хамӑр пурӑнакан пӳртсене ҫутӑ кӗртнипе пӗрлех, фермӑсенче электричествӑпа усӑ курас, урамсене симӗслетес ӗҫсене тумалла. Ҫӗршыври пур вырӑнсенче те малалла аталанса пыраҫҫӗ пулсан, Маленков ячӗпе тӑракан колхоз та электричествӑсӑр, радиоузелсӑр, киноустановкӑсӑр, хата-лабораторисӗр, стандартлӑ ҫуртсемлӗ культурӑллӑ урамсемсӗр пурӑнма пултараймасть, ҫавӑн пек пуласса ӗненетпӗр эпир.

* * *

Парторганизаци хушнипе ялти комсомолецсем Статуправлени пӗлтерӗвне килсерен вуласа параҫҫӗ. Колхозри стена хаҫачӗсем нумай материалсем пичетлеҫҫӗ. Ҫитӗнӳсене кӑтартакан витрина йӗркеленӗ. Унта цифрӑсемпе диаграммӑсем кӑна мар, ӳкерчӗксем те пур. Ӳкерчӗксен выставкисем: «Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансем», «Пирӗн промышленность» тата «Халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли государство планне ирттерсе тултарнипе эпир Мире тӗреклететпӗр» витринӑсем пур.

— Кӑҫал тата лайӑхрах ӗҫлесчӗ-ха!—теҫҫӗ агитаторсем хыҫҫӑн колхозниксем.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Калинино районӗ.

Мускаври автомашинӑсем тӑвакан Сталин ячӗпе тӑракан заводра пиншер рабочи кашни операцие пысӑк пахалӑхпа тӑвассишӗн кӗрешет.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: инструментсем тӑвакан III-мӗш цехри В. И. Бобков токарь. Вӑл ҫӗнӗ стройкӑсен заказӗсене пурнӑҫлать, нормӑпа палӑртнинчен икӗ хут ытларах паха детальсем туса кӑларать.

В. ЗУНИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Суту-илӳ работникӗсен ӑмӑртӑвӗ

Ҫак кунсенче Етӗрне районӗнчи потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекен работниксен пӗрлехи пухӑвӗ пулса иртнӗ. Пуху 1952 ҫулхи тавар ҫаврӑнӑш планне тултарасси, ӗҫсыннисен кулленхи ыйтӑвӗсене лайӑх тивӗҫтересси ҫинчен сӳтсе явнӑ.

Суту-илӳ работникӗсем хӑйсен усӑ курман резервӗсене тата потребительсен кооперацийӗнче малта пыракан организацисен опытне шута илсе, ӗҫсыннисемпе колхозсен тата учрежденисен ыйтӑвӗсене культурӑллӑ тивӗҫтерес тесе, социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса ҫӗнӗ обязательствӑсем йышӑнчӗҫ.

Вӗсем Етӗрне райпотребсоюзне ҫирӗплетсе панӑ 1952 ҫулхи тавар ҫаврӑнӑш планне Сталинла Конституци кунӗ тӗлне тултарма, плана кашни суту-илӳ организацийӗ, кашни магазинпа ларек енӗпе пурнӑҫлама, хулара та, ялсенче те культурӑллӑ суту-илӗве анлӑ сарма, таварсен ассортиментне пысӑклатма, халӑхӑн ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене тулли тивӗҫтерме социализмлӑ обязательство йышӑннӑ.

Тавар ҫаврӑнӑшне ӳстерес тӗлӗшпе вырӑнти промышленность предприятийӗсемпе промысла артелӗсем туса кӑларакан таварсене ытларах туянса сутма, столовӑйсемпе чайнӑйсен ӗҫне лайӑхлатма, вӗсене пӗрмай таса тата йӗркеллӗ тытма палӑртнӑ.

Потребительсен кооперацийӗ ҫулсерен ялхуҫалӑх продукчӗсем тата промышленность валли чӗртавар чылай хатӗрлет. Ӗҫсыннисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатасси, промышленность куллен кирлӗ паха таварсем ытларах туса кӑларасси потребительсен кооперацийӗ государство заданийӗсене чыслӑ пурнӑҫласа пынинчен сахал мар килет. Ҫакна асра тытса, суту-илӳ работникӗсем ялхуҫалӑх продукчӗсемпе чӗртавар хатӗрлемелли ҫулталӑкри плана пур енӗпе те Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 35 ҫул тултарнӑ кун тӗлне пурнӑҫлама сӑмах панӑ.

ЧӐВАШ АССР-ӗнчи РАЙОНСЕМ 1952 ҪУЛХИ ПӖРРЕМӖШ КВАРТАЛТА УКҪА-ТЕНКӖ ПУХМАЛЛИ ПЛАНА ФЕВРАЛӖН 1-мӗшӗ ТӖЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Пурӗ	Вӑл шутран: Ялхуҫалӑх налогӗ	Вӑл шутран: Хресченсенчен заем укҫи пухӑ
Чурачӑк	35,2	57,5	20,0
Улатӑр	33,8	31,7	8,3
Елчӗк	33,2	45,5	25,0
Шупашкар хули	32,9	24,3	—
Улатӑр хули	32,6	60,0	—
Красноармейски	32,2	59,0	14,7
Шупашкар	31,9	36,6	20,7
Ишлей	31,9	36,7	20,0
Калинино	31,7	29,5	19,4
Муркаш	31,6	35,1	60,0
Пӑрачкав	30,3	28,5	6,7
Вӑрнар	30,1	29,0	5,2
Сӗрпӳ	29,8	30,5	15,6
Сӗнтӗрвӑрри	29,4	41,0	22,2
Канаш хули	29,3	33,4	—
Куславкка	27,5	31,0	11,8
Канаш	26,8	36,1	13,0
Элӗк	26,6	42,3	16,7
Чкаловски	25,8	36,7	12,8
Советски	25,5	24,9	19,2
Йӗпреҫ	24,6	21,9	17,1
Комсомольски	24,6	46,8	9,0
Ҫӗмӗрле	24,1	19,7	8,3
Етӗрне	24,1	28,5	1,9
Сӗнтӗр	23,8	25,9	25,4
Шӑхасан	23,7	53,6	5,3
Вӑрмар	23,0	25,0	7,3
Тӑвай	22,7	38,3	10,4
Октябрьски	22,3	43,4	8,1
Первомайски	19,8	22,4	3,9
Кувакино	19,5	28,7	13,3
Шӑмӑршӑ	18,4	4,1	3,6
Хӗрлӗ Чутай	15,5	17,7	2,6

Совет Союзӗнчи ӗҫсыннисен культурӑпа техника шайӗ ӳссе пырать

Наукӑллӑ коммунизм никӗсне хывакансем Маркспа Энгельс, Ленинпа Сталин ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи хирӗҫ-хирӗҫлӗх мӗншӗн пулнине наука енӗпе сутатса парса, ҫав хирӗҫ-хирӗҫлӗхе пӗтермелли ҫулсене кӑтартса пачӗҫ.

Эксплуататорла классен идеологӗсем ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи уйрӑмлӑх вӑл законлӑ япала, общество пурнӑҫӗнче яланах ҫапла пулмалла, тесе ӗнентерме пӑхаҫҫӗ. Ҫапла вӗсем капитализма тата капитализм чухне ҫынна ҫын тискер эксплуатациленнине сыхласа хӑварма тӑрӑшаҫҫӗ. Чӑннипе илсен, ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи хирӗҫ-хирӗҫлӗх ӗмӗртеннех пыракан япала мар. Вӑл производство средствисем уйрӑм ҫынсен аллине куҫнӑ май тата общество тӑшманла классем ҫине уйрӑлнӑ май пулса кайнӑ.

Капитализма ӗҫсыннисен культури ӳсни кирлӗ мар. Капитализм условийӗсенче рабочисемпе хресченсене нимӗн хӗрхенмесӗр эксплуатацилеҫҫӗ, вӗсем чуралӑхра, чухӑнлӑхпа тӗттӗмлӗхре пурӑнаҫҫӗ. Ҫак условисенче ӑс-тӑн ӗҫӗ, вӗренӳ ӗҫӗ, наука, искусство буржуази аллинче тӑрать. Капитализм чухне культура ҫитӗнӗвӗсем эксплуататорла классене усӑ кӳреҫҫӗ, вӗсен интересӗсене хӳтӗлеҫҫӗ.

Капитализм чухне работник машинӑн ӑс-тӑнлӑ пайӗ пулса тӑрать, тенӗ Маркс. Паллах ӗнтӗ, капиталистсем рабочисене наукӑна алла илме пур майсемпе те чарса тӑраҫҫӗ, *мӗншӗн тесен рабочи класӑн культури ӳснӗ май унӑн класлӑ ӑнланулӑхӗ те ӳссе пырать.*

Социализмлӑ революци капиталистсемпе помещиксене сирпӗтсе антарчӗ те совет влаҫӗ туса хучӗ, пирӗн ҫӗршывра ӗҫпе наука хушшинчи антагонизма пӗтерчӗ. Совет стройӗ халӑхӑн аслӑ пултарулӑ вӑйӗсене ҫӗклерӗ, общество интересӗсемпе кашни совет ҫынни интересӗсене хӳтӗлекен ӗҫпе наука тума ҫул уҫрӗ. Наука халӗ социализм ҫӗршывӗнчи мӗнпур ӗҫсыннисене усӑ кӳме ӗҫлет. Ленин ҫапла каланӑ: «Ӗлӗк этемӗн пӗтӗм ӑс-тӑнӗ, унӑн пӗтӗм генийӗ пӗрисене техникӑпа культурӑн пур ырлӑхӗсене те парса, теприсене чи кирлине те паман—ҫутта тухма та, аталанма та май паман. Халӗ ӗнтӗ техникӑн мӗнпур ҫитӗнӗвӗсем, культура ҫӗнтерсе илнисем пурте пӗтӗм халӑх аллинче пулаҫҫӗ, хальтен пуҫласа этемӗн ӑс-тӑнӗпе генийӗ нихҫан та пусмӑрламалли хатӗр, эксплуатацилемелли хатӗр пулмӗҫ» (В. И. Ленин. Соч., 26 т., 436 стр.).

Пирӗн революцин чи паха уйрӑмлӑхӗ ҫакӑнта пулать,—тет Сталин юлташ,—вӑл халӑха ирӗклӗх кӑна мар, тата материальнӑй ырлӑхсем те, пуян та культурӑллӑ пурӑнмалли майсем те пачӗ.

Совет государствипе большевиксен партийӗ Октябрьти революци хыҫҫӑнах ӗҫсыннисене хут вӗрентме, халӑх валли пур йышши шкулсене те уҫма, культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем организацилеме, социализмлӑ халӑх интеллигенцине тума, пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗ культура тума пысӑк ӗҫсем пуҫласа ячӗҫ. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче пинӗ-пинӗпе шкулсем, техникумсем, аслӑ шкулсем, наука учрежденийӗсем, клубсем, театрсем уҫнӑ. Воспитанипе вӗренӳ ӗҫӗ, вӗренекенсен социальнӑй составӗ те улшӑнчӗҫ.

Тӗнчере пӗр государство та халӑх культурине пирӗн ҫӗршыври пек ӳстернипе мухтанма пултараймасть. Партипе Совет правительстви тӑрӑшнипе пирӗн ҫӗршывра хут пӗлменлӗхе пӗтӗмӗшпех пӗтерчӗ, миллионшар ҫынсем аслӑ шкулсемпе вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ, рабочисемпе хресченсен йышлӑ интеллигенцине тунӑ. Миллионшар совет гражданӗсем производство, государство, общество ӗҫне хутшӑнса, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвакансем пулса тӑчӗҫ.

Рабочи класпа хресченсен техникӑллӑ пӗлӗвӗсемпе культури ӳссе пынине 16 ҫул каярах промышленноҫпа транспортра пуҫланса кайнӑ стахановла юхӑм питех те уҫҫӑн кӑтартса парать.

Стахановецсен пӗтӗм Союзри пӗррӗмӗш канашлӑвӗнче тухса каланӑ историллӗ сӑмахӗнче Сталин юлташ стахановла юхӑм пӗтӗм тӗнче историйӗнче паллӑ вырӑнта тӑнине кӑтартса пачӗ. Стахановла юхӑмра «рабочи класс малашне культурӑпа техника тӗлӗшӗнчен ҫӗкленессин тӗшши пур, вӑл пире социализмран коммунизма куҫма тата ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи хирӗҫ-хирӗҫлӗхе пӗтерме кирлӗ ӗҫ тухӑҫлӑхӗн ҫӳлӗ виҫине ҫитме ҫул уҫса парать».

Сталин юлташ ҫакна кӑтартса пачӗ: ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи хирӗҫ-хирӗҫлӗхе ӗҫсыннисен культурӑпа техника шайне инженерла-техникла ӗҫри работниксен шайӗ таран ҫӗкленӗ пикӗс ҫинче пӗтерме пулать. Совет стройӗн условийӗсенче, ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене капитализм сӑнчӑрӗсенчен хӑтарнӑ ҫӗрте, ӗҫе эксплуатаци пусмӑрӗнчен хӑтарнӑ ҫӗрте, влаҫа рабочисемпе ӗҫхресченсем тытса тӑнӑ ҫӗрте тата ҫамрӑк ӑрӑвӑн ҫителӗклех вӗренме пур майсем те пур ҫӗрте, ҫав ӗҫе тума пулать. Стахановецсем вӗсем—культурӑллӑ, техникӑна вӗреннӗ ҫынсем, ӗҫре ыйсуллӑ та йӗркеллӗ ҫынсем, вӑхӑта хаклама пӗлекен ҫынсем. Вӗсем техникӑна пӗтӗмӗшпех вӗренсе алла илнӗ ҫынсем, техникӑран мӗн илме май пуррине пӗтӗмпех илме пӗлекен ҫынсем. Стахановецсем вӗсем—производствӑри хӑюллӑ новаторсем, техникӑна тата ӗҫе организацилессине пӗрмаях лайӑхлатса пыракансем, вӗсем хӑйсен пултарулӑ ӗҫӗпе наукӑпа практикӑна пуянлатса пыраҫҫӗ. Ҫӗнни, малта пыраканни ҫиввине хирӗҫ, общество аталанӑвне чарса тӑраканнине хирӗҫ кӗрешни стахановла юхӑмра уҫҫӑнах палӑрса тӑрать.

Сталин юлташ партин XVIII-мӗш съездӗнче, социализмран коммунизма куҫнӑ тапхӑрти задачӑсене палӑртса, ҫапла каларӗ: «Эпир пур рабочисемпе пур хресченсене те культурӑллӑ та вӗреннӗ ҫынсем тӑвас тетпӗр, вӑхӑт ҫитсен эпир ҫакна тӑватпӑр». И. В. Сталин кӑтартса пани партипе Совет государствин ӗҫӗнчи программа пулса тӑчӗ. Государствӑпа политика тӗлӗшӗнчен калама ҫук пысӑк вырӑнта тӑракан ҫак задача пирӗн ҫӗршывра ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗнче техника хӑвӑрт малалла кайрӗ, производство процесӗсене электрификацилесси, механизацилесси, автоматизацилесси, химизацилесси анлӑн пулса пырать. Ҫакна пула пысӑк квалификациллӗ ӗҫ малти вырӑна тухса тӑрать, ӗҫсыннисен культурӑпа техника шайӗ ӳсет. Квалификацисӗр, йывӑр ӗҫсен профессийӗсем сухалсах пыраҫҫӗ. Партипе правительство куллен тӑрӑшнипе пирӗн ҫӗршывра рабочи класс йышӗ пӗрмаях ӳсет, унӑн культурӑпа техника шайӗ хӑпарсах пырать. 1950 ҫулӑн вӗҫӗнче рабочисемпе служащисен хисепӗ, вӑрҫӑччен хи 1940 ҫулхи хисепрен 7 миллион та 700 пин ҫын ӳссе, пӗтӗмпе 39 миллион та 200 пин ҫынна ҫитнӗ. 1951 ҫул хушшинче рабочисемпе служащисен хисепӗ 1 миллион та 600 пин ҫын ӳснӗ. 1951 ҫул вӗҫӗнче вара рабочисемпе служащисем пирӗн ҫӗршывра 40,8 миллион ҫынна ҫитнӗ.

Квалификациллӗ рабочисен кадрӗ ӳсни рабочи класӑн культурӑпа техника шайӗ ӳснине, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳснине пӗлтерет. Социализм принципне—ӗҫшӗн унӑн хисепӗпе пахалӑхне кура тӳлес принципа ҫирӗп тытса пыни ӗҫсыннисен культурӑпа техника шайне пӗрмаях ӳстерсе пыма май парать. Ҫак принцип кашни ӗҫсыннине ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме хавхалантарать. Ӗҫсыннисен культурӑпа техникине ӳстерсе пыракан вӑй совет патриотизмӗ тата пирӗн ҫынсен коммунистла ӑнланулӑхӗ пулса тӑрать.

Совет Союзӗнче рабочи класӑн йышне тата унӑн культурӑпа техника шайне ӳстерсе пыракан ҫӑлкуҫӗсенчен пӗри вӑл государство ӗҫ резервисен системи пулса тӑрать. Ҫав вӑхӑтрах производствӑра та квалификациллӗ рабочисен кадрӗсене нумай хатӗрлеҫҫӗ. Промышленность предприятийӗсенче, стройкӑсенче тӗрлӗ курссемпе техника минимумӗн шкулӗсем организациленӗ, вӗсенче рабочисем хӑйсен квалификацине ӳстереҫҫӗ. Производствӑра рабочисене бригадӑпа та, пӗччӗншерӗн те вӗрентеҫҫӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе ӗҫ культурине ӳстерес тӗлӗшпе Ф. Л. Ковалев инженер пуҫарӑвӗ пысӑк вырӑнта тӑрать, вӑл ӗҫе организацилессине тата малта пыракан рабочисен чи лайӑх ӗҫ меслечӗсене тӗпчесе пӗлме, ҫав меслетсене ытти рабочисене вӗрентме наука енчен тӗрӗс система тунӑ.

Нумай пин рабочисемпе хресченсем, ӗҫленӗ хушӑрах вӗренсе, вӑтам тата аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухаҫҫӗ, пысӑк квалификациллӗ специалистсем пулаҫҫӗ.

Ялти ӗҫсыннисен культурӑпа техника шайне ӳстерес тӗлӗшпе партипе Совет государстви пысӑк ӗҫсем туса ирттереҫҫӗ. Ялӑн экономикӑпа культурӑллӑ пурнӑҫне урӑхлатса ҫӗнетес ӗҫре рабочи класс калама ҫук пысӑк пулӑшу кӳчӗ. Колхоз стройӗ хресченсене ялта ӑнӑҫлӑн социализм тума лайӑх условисем туса пачӗ. Ялхуҫалӑхне механизацилени тата электрификацилени колхозлӑ ялӑн экономикипе культурине ҫӗклекен хӑватлӑ вӑй пулса тӑрать. Халӗ нумай енлӗ хуҫалӑха организацилес тӗлӗшпе те, пысӑк тупӑшсем илес енӗпе те кӑтартуллӑ колхозсем нумай ӗнтӗ. Колхозсенче ҫӗнӗ йышши ялхуҫалӑх машинисемпе, электричество вӑйӗпе анлӑн усӑ кураҫҫӗ, ҫӗрӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе наука вӗрентнӗ пек туса пыраҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗ, Совет правительстви тата Сталин юлташ ӗлӗк кая юлнӑ халӑхсен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тата культурине ӳстерессишӗн уйрӑмах тимлӗ тӑрӑшаҫҫӗ.

Ӗлӗк Чӑваш ҫӗршывӗнче ялхуҫалӑхӗнчи тӗп ӗҫ хатӗрӗсем йывӑҫ сухапуҫпе сӳре, сурлапа тӑпачӑ пулнӑ. Чӑваш халӑхӗн революцичченхи пӗтӗм историйӗ тӑршшӗнче пӗр ӗҫсынни те аслӑ шкулта вӗренме пултарайман. Революциччен Чӑваш ҫӗршывӗнче аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ ҫынсем 20 ҫын ытларах кӑна пулнӑ.

Колхоз стройӗ чӑваш ялӗн сӑн-сӑпатне *улӑштарчӗ. Республикӑра 31 машина*-трактор станцийӗ ӗҫлет. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ умӗнех республикӑра чылай трактор, 374 комбайн пулнӑ. Халӗ трактор паркӗпе ытти ялхуҫалӑх машинисен *хисепӗ чылай ӳснӗ. 1950 ҫулта кӑна* республикӑри машина-трактор станцийӗсем 510 трактор, 90 комбайн, 2 пине яхӑн ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх машинисем илчӗҫ. Трактор паркӗ ӳснӗ май машина-трактор станцийӗсем ӗҫлесе паракан ҫӗр лаптӑкӗ те ӳсрӗ.

Чӑваш республикинче халӗ вӑйлӑ тырпул туса илекен мастерсем пиншерӗн шутланаҫҫӗ. Тухӑҫлӑ тырпул туса илекен колхозсен хисепӗ темиҫе ҫӗре ҫитиех ӳсрӗ. Сӑмахран, Елчӗк районӗнчи «КИМ» колхоз 1949 ҫултах 223 гектар ҫинчен ыраш гектар пуҫне 21,5 центнер, 186 гектар ҫинчен тулӑ гектар пуҫне 18-шар центнер туса илнӗ. Юлашки икӗ ҫул хушшинче ҫав колхоз тырпул тухӑҫлӑхне татах та ӳстерчӗ.

Колхоз производствинче пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн республикӑра 21 колхозника Совет правительстви Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ ятне панӑ, ялхуҫалӑх мастерӗсене 517 ҫынна Совет государствин орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑланӑ.

Чӑваш республики пурте хут пӗлекен ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Аслӑ тата вӑтам шкулсенче вӗренесси анлӑ сарӑлчӗ. Хуласенче ачасене пурне те вунӑ ҫул вӗрентес ӗҫ, ялсенче—обязательнӑй йӗркепе ҫичӗ ҫул вӗрентес ӗҫ пурнӑҫа кӗрсе пырать. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче республикӑра педагогика, ялхуҫалӑх, учительсем хатӗрлекен, наукӑпа тӗпчев институчӗсем, энергетика, электромеханика, пир-авӑр, коопераци, финанс техникумӗсемпе ытти техникумсем тата училищӗсем нумай уҫӑнӑ. Вӑтам, ҫичӗ ҫул вӗренмелли тата пуҫламӑш шкулсен хисепӗ темиҫе хут ӳснӗ. Ҫӗршер, пиншер ҫамрӑксем республикӑри институтсенче, Мускаври, Ленинградри, Горькинчи, Свердловскри, Харьковри, Хусанти тата Совет Союзӗн ытти хулисенчи университетсемпе институтсенче вӗренеҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗ, Совет правительстви тата аслӑ Сталин куллен тӑрӑшнипе чӑвашсем хушшинче инженерсемпе техниксен, врачсемпе учительсен, агрономсемпе зоотехниксен, наука, искусство, литература деятелӗсен кадрӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ.

Чӑваш халӑхӗ халӗ Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин произведенийӗсене хӑйӗн тӑван чӗлхипе вуласа вӗренет, совет писателӗсен, вырӑс литературипе тӗнчери литература классикӗсен кӗнекисене тӑван чӗлхепе вулать. Чӑваш халӑхӗн хӑйӗн театрсем пур.

Чӑваш колхозникӗсен хӑйсен килӗнче библиотекӑсем пур, вӗсем хӑйсем те халӗ кӗнекесем сыраҫҫӗ. Ҫак паха факт колхоз хресченӗсен культури ӳснине, ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи уйрӑмлӑх хулара ҫеҫ мар, ялта та сухалса пынине кӑтартса парать.

Большевиксен партийӗпе Совет государстви социализмлӑ революцин чи паллӑ задачисенчен пӗрне татса пачӗҫ: пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗ, социализмлӑ интеллигенци тунӑ. 1939 ҫулта пирӗн ҫӗршывра аслӑ шкулсемпе вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ ҫынсем 14 миллион ҫын пулнӑ, вӗсенчен 10 миллион ҫын совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче вӗренсе тухнӑ. 1939 ҫулта совет интеллигенцийӗ, хӑйсен ҫил-йышӗпе пӗрле илсен, Совет Союзӗнче пурӑнакан халӑхӑн 13—14 процентне яхӑн шутланнӑ. Совет интеллигенцийӗ пирӗн ҫӗршывра хӑватлӑ пултарулӑ вӑй пулса тӑчӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗкҫуллӑхра халӑх хуҫалӑхӗ аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ специалистсем 632 пин ҫын, вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ специалистсем 1 миллион та 273 пин ҫын илчӗ. 1940 ҫулхипе танлаштарсан, специалистсен хисепӗ 84 процент ӳсрӗ. 1951 ҫулта аслӑ шкулсенчен 201 пин ҫамрӑк специалист, техникумсенчен 262 пин специалист вӗрентсе кӑларнӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗкҫуллӑхра наукӑпа техникӑра ҫӗнӗ пысӑк открытисемпе изобретенисем тунӑ. Наукӑпа тӗпчев учрежденийӗсен хисепӗ 1,5 хут, наука работникӗсен хисепӗ 2 хут ӳсрӗ.

Наукӑпа техникӑра калама ҫук пысӑк ҫитӗнӳсем туни, рабочи класӑн культурӑпа техника шайӗ ӳсни ҫакӑнтан та лайӑх курӑнса тӑрать: Атӑл, Аму-Дарья, Днепр ҫинче сталинла саманари коммунизмӑн аслӑ стройкисене тума тытӑннӑ. Атӑл лешь енче, Каспи тинӗсӗ патӗнчи сеҫенхирсенче, Аму-Дарья шывӗн анат тӑрӑхӗнче, Кара-Кум пушхирӗсенче, Украинӑн кӑнтӑр районӗсемпе Крымӑн ҫурҫӗр районӗсенче ҫӗре шӑварма тата шыв илсе пыма ҫӗнӗ системӑсем туни ҫутҫанталӑка улӑштарса ҫӗнетмелли сталинла план тӑрӑх калама ҫук пысӑк гидростанцисем туни—пирӗн ҫӗршывра коммунизм тӑвас ӗҫре паллӑ вырӑнта тӑраҫҫӗ.

Совет стройӗ производительнӑй вӑйсене аталантарма, ҫутҫанталӑка этеме пӑхӑнтармалли калама ҫук аслӑ плансене пурнӑҫа кӗртме пысӑк майсем парать. Ученӑйсем, промышленноҫпа ялхуҫалӑх работникӗсем туслӑн ҫыхӑнса ӗҫлени ҫутҫанталӑка улӑштарса ҫӗнетмелли сталинла плана пурнӑҫа кӗртме май паракан *условие пулса тӑрать.*

Пирӗн ҫӗршыври ӗҫсыннисен культурӑпа техника шайӗ ӳсни рабочи класс, хресченсем тата интеллигенци хушшинчи уйрӑмлӑхсем, ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ *хушшинчи хирӗҫ-хирӗҫлӗх ытларах та ыт*ларах сухалса пынине кӑтартса парать.

В. ЖИРНОВ.

„Агитатор блокночӗн" черетлӗ номерӗ

ВКП(б) Чӑваш обкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗ кӑларакан «Агитатор блокночӗн» черетлӗ, 2-мӗш номерӗ пичетленсе тухнӑ. Унта А. Ерлаковӑн «Ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрлепер», Г. Николаевӑн «Вӑрман» хатӗрлес ӗҫре механизмсемпе туллин усӑ курар» ятлӑ статьисем пичетленнӗ.

Кунсӑр пуҫне Шупашкарти Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводри инженер конструктор Я. А. Рипс юлташ иккӗмӗш сборочнӑй цехра производство культури ҫинчен ирттернӗ калаҫу тата Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Коммунизм» колхозри парторганизаци секретарӗн заместителӗ А. Мареева юлташ агитаторсем вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫе мӗнле организацилени ҫинчен каласа пани пичетленнӗ.

Критикăпа библиографи

ÇАМРĂК ĂРУ*)

Иртнĕ çул Чăвашгосиздат ачасем валли чылай кĕнекесем кăларчĕ. Вĕсен шутĕнче Василий Давыдов çырнă «Çамрăк ăру» кĕнеке те пур. Çак кĕнеке Василий Давыдов поэт пултарулăхĕ ÿссе пынине, вăл сăвă çырас ăсталăха чылай вĕреннине кăтартать.

Ачасем валли сăвăсем çырасси—йывăр ĕç. Поэт, хăй çитĕннĕ çын пулин те, ачасем валли çырнă чух ачалăха таврăнмалла, ачасен чун-чĕрине, шухăш-кăмăлне ăнланмалла.

Анчах ку çеç çителĕксĕр. Ачалăха таврăннă поэтăн хăйĕн пĕлÿлĕхĕсĕр пуçне тĕнчене тата пурнăçа ăнланнипе, асăрханипе, тишкĕрнипе те кирлĕ пек усă курмалла.

Ачасене Тăван çĕршыва юратма, совет патриочĕсем пулма вĕрентесси, вĕсене лайăх вĕренме хавхалантарасси, çирĕп, сывă, паттăр ÿсме пулăшасси—акă мĕнле задачăсем тăраççĕ ачасем валли çыракан поэт умĕнче.

Василий Давыдов хăйĕн чылай сăввисенче ачасене калаçма кирлĕ чĕлхе тупнă, вăл вĕсем валли паха сăвăсем çырнă.

«Çамрăк ăру» кĕнеке «Çулпуçăмăр Сталин» ятлă сăвăпа пуçланать.

«Çут хĕвел ялкăшса хăпарать,
Çĕршыв ылтăн тумпа витĕнет.
Ĕç юрри шăранать таврара,
Çулпуç ячĕ мухтавлăн кĕрлет.
Сталин—пирĕн çулпуç.
Сталин—пирĕн куç-çул.
Юр(ă) юрлатпăр пурте савăнса,
Аслă Сталин, сана мухтаса!»

Çакна вуласан куç умне çулпуçăн паттăр сăнарĕ тухса тăрать. Сăвă чĕрене çирĕплĕх, мăнкăмăллăх парса мăнаççăн илтĕнет. Сталин çинчен малалла поэт çапла çырать:

«Эс паран вăй-хăват çĕршыва,
Эс сыхлан çут тĕнче тивлетне!
Чунтанах тав тăватпăр сана —
Пурнăçпа Çĕнтерÿ ялавне.
Сталин—пирĕн ялав.
Сталин—пирĕн хăват.
Юр(ă) юрлатпăр пурте савăнса,
Аслă Сталин, сана мухтаса!»

Поэт кунта, совет халăхĕн шухăш-кăмăлне, совет çыннисем Сталин юлташа сума-суса, юратса тăнине кăтартса панă. Халăх калакан сăмахсене, ĕççыннисен чĕрини сăмахсене поэт лайăх палăртнă.

Совет халăхĕ мире тĕрĕклетме пĕтĕм вăя хурать. Тĕнчере таса кăмăллă çынсем пурте вăрçа хирĕç тăраççĕ. Миршĕн кĕрешес ĕçре Давыдов поэт та хăйĕн сассине пачĕ. «Эпир миршĕн» сăвăра вăл совет çыннисем миршĕн кĕрешни çинчен çырать. Мире çирĕплетес ĕçре малта пыракан Совет çĕршывне мухтаса юрлать.

«Нихçан та эпир вăрçă çук
Алăран çĕнтерÿ ялавне.
Пире паллă: пырать мĕнпур çул
Пĕр тĕле—коммунизм патне.
Ялкăш, ялкăш мухтавлăн
Çĕнтерÿллĕ ялав
Мирлĕ пурнăç хăватлăн
Эс, çĕклен, вăйлăлан!»

«Сталинград» сăвăра автор Сталин ячĕпе тăракан герой-хулан ыйсĕлми чапĕпе мухтавĕ çинчен çапла хавхаланса çырать:

«Чун уççи аслă Атăл çинче.
Сан гранит пек хăмÿ çумĕнче
Коммунизм стройки хăпарать,
Сталинград!
Сталинград!
Сталинград!»

Çавăн пекех «Комсомол юрри», «Чаплă Мускав хулинче» сăвăсем те ачасем валли кирлĕ сăвăсем.

Анчах кĕнекере çитменлĕхсем те пур. Кĕнекене вулапă май, кăлтăксем чылай тупăнаççĕ.

Пирĕн задача—ачасене коллективизма вĕрентесси, вĕсене пĕрле ĕçлеме, канма, савăнма хăнăхтарасси. Урăхла каласан, коммунизм вăхăтĕнче пурăнакан çынсем туса ÿстересси. Çак енĕпе илсен, Давыдов кĕнеки паянхи кун кăларса тăратакан требованисене тивĕçтерме пултараймасть. Унăн чылай сăввисенче ачасем пĕччен кăна ĕçлеççĕ, вĕсене шкулта, колхоз ĕçĕнче сахал куратăн, вĕсем ялан тенĕ пекех килте. Акă, «Шурă хурăн» сăвăра пĕр ача пĕчченех кÿлĕ хĕррине хурăн лартать, ун йĕри-тавра çатан авса хурать, ирĕн-каçăн шыв сапать. «Парне» сăвăра та пĕр çамрăк пĕчченех улма пахчине пырать, шăпчăк юррине илтет. «Шăллăмсем» сăвăри те пĕр ача хăй валли турник тăвать.

Çапла, автор кĕнекере ачасене хăйсен кулленхи пурнăçĕнчен, ĕçĕнчен, колхозран, шкултан, отрядран уйăрса кăтартать, пĕччен ĕçлекенсем туса хурать, колхозри ĕçсене сăнласа парас вырăнне килти хуçалăхри ĕçсем çинчен калать.

Пирĕн пурнăç Октябрьти революци хыççăн тĕлĕрмелле пысăк утăмсемпе малалла кайрĕ: ял сăн-сăлачĕ, пурнăç çĕнелсе улшăнчĕ. Анчах çак улшăнусене поэт кирлĕ пек курмасть. Сăмахран, «Ирхи илем» сăвăра автор «сывлăмлă ир таптаса», тет. Çутă кÿлĕ ялкăшни çинчен, усă сывлăш вăркăшни çинчен, тăрă шыв юхни çинчен, чечексем тăррине чал хурчĕсем çĕрлесе вĕçни çинчен çырать. Анчах колхозлă яла ветродвигательлартни çинчен, хăй тĕллĕн çÿрекен комбайн хир тăрăх пыни çинчен, колхоз шоферĕ ирех «ЗИС» машинăпа кĕрлеттерсе тухни çинчен, фермăн йышлă ĕнисем, сурăхĕсем улăха кĕшĕлтетсе кини çинчен, колхоз пахчичи çырлисем, йывăçсем çинчен автор асăнмасть.

Автор çĕнĕ сăмсене, çĕнĕ çынсене курманни «Ăшă сумăр», «Кăçхине», «Юрă» т. ыт. сăвăсенче те сисĕнет.

Хăшпĕр сăвăсен шухăшĕ лайăх, анчах автор çав шухăша ачасен чĕри патне кирлĕ пек илсе çитереймен. Вăл ăпăла «лайăххи», «савăнăçли», «кирли» çинчен калать. Анчах мĕншĕн кирлине, савăнăçлине, лайăххине вĕри тăмалла каласа параймасть. Ăçра юлакан вăйлă образсем çук.

Кунсăр пуçне автор хăйĕн шухăшне каласа панă чух ачасемшĕн ăнланмалла мар, кивĕ майпа усă курать. Акă, тĕслĕхрен, «Çутă кĕç» сăвва илер. Сантăр каччă вăрçа тухса каять. Вăл çид-çунат урхамахне йĕнерленĕ, ашшĕ ăна çивчĕ хĕç парать. Анчах автор çырса пани пĕрре те ĕненмелле мар: килтенех лашапа, хĕçпе салтака кайни халăх вăхăтĕнчи характерлă япала мар. Колхоз лашисене фронта уйрăм çын улă пăрса ямасть. Халăх вăрçăра техника тракторсем вăрçмачи пек çеç мар, темиçе хут ÿснĕ. Çавăнпа хĕçе символ вырăнне хуни те вырăнлă мар пек. Паллах, Сантăр каччă «КВ» танк çинче е «Катюша» патĕнче пулнă. Автоматпа отăйăн кайнă.

«Çамрăк ăру» кĕнекере чĕлхе енчен те кăлтăксем пур. Автор «шкул» сăмаха «шкулĕ» тесе, «ачасем» сăмаха «ачсем», «кăйăкан» сăмаха «кăйăккан» т. ыт. те тесе çырать. Çавăн пекех: тĕрлес, кăлтăртатас, хумханас, юрлас, евĕрлĕ сăмахсем нумай. Сăвăра та сăмахсене пăсса çырни килĕшÿсĕр. «Уйăх сути» вырăнне «уйăх çутисем» тени те тĕрĕс мар.

Василий АЛЕНДЕЙ.

*) **В. Давыдов.** Çамрăк ăру. Чăвашгосиздат. 1951 çул. Редакторĕ Н. Ильбек.

Колхоз пурнăçĕн ыйтăвĕсем

Усă курман майсем

ВĂРНАР. Мăнъял Хапăсри «Гигант» колхоз хуçалăх тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр тĕреклесе пырать, районта кая юлса пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Мĕншĕн-ха ун пек?

Вăрçă хыççăнхи ултă çул хушшинче кунта 8 колхоз председателĕ улшăннă, кашни çулах ялхуçалăх артелĕн сталинла уставне пăснă тĕслĕхсем пулнă. Кăçалччен ĕçленĕ пур председательсем те пĕрлешÿллĕ хуçалăх çине чăн-чăн хуçалла пăхман, хуçалăха вăйлатма пур тĕрлĕ майсемпе те усă курман. Тĕштырăсем, техникăллă культурăсем туса илес, выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес, унăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ.

Колхозниксем пĕлтĕр колхоз председателĕ пулма Вăрнар МТС-ĕн участокри агрономне Г. Павлов юлташа суйларĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл ертсе пынипе колхоз чылай çитĕнÿсем турĕ. Тĕштырăсем туса илесси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2 хута яхăн ÿсрĕ, техникăллă культурăсем те иртнĕ çулхинчен 1,5 хут ытларах туса илнĕ. Ялхуçалăх машинисемпе ĕçлесси лайăхланнă. Уй-хир ĕçĕсене 80 процент таран МТС машинисемпе тунă.

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе те лайăхрах ĕçлеме пуçланă. 1951 çулта çамрăк выльăхсене алла илсе вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтернĕ. Фермăсем 1950 çулхинчен икĕ хут ытла тупăш панă.

Строительство бригади ферма ... илсе ... пĕр. Колхоз стройматериал чылай хатĕрлерĕ.

Фермăсенче ĕçсене механизацилеççĕ. Бофильонариксем, ... , картофелекăлăсем тунă. Иртнĕ çулсенче çĕн тапмалли машина лапа вăйĕпе ĕçленĕ пулсан, халĕ ăна двигатель вăйĕпе ĕçлемелле тунă.

Анчах çитменлĕхсем, хуçалăха вăйлатма усă курман майсем халĕ те нумай-ха.

Çĕрĕç культурине лайăхлатмалла. Вăрăнта тата минераллă удобренисене çахтаранчен сахал усă курнă. Кашни çулах сахалтан та 300—400 тонна минераллă удобрени кирлĕ пулсан, пĕлтĕр ăна 20 тонна çеç тунă, 1500 тонна тислĕк кăлармалла пулсан, 300 тонна кăна кăларнă. Çак ĕçсене пурнăçласан, колхоз хальхинчен чылай ытларах тыррул туса илме пулĕччĕ.

Уйăрăм бригадăсен агротехника хăтартăвĕсене лайăх пурнăçлама тăрăшмарĕ. Акă Алексей Беляев бригадир ертсе пыракан бригада уйăрăм лаптăксенче кашни гектартан 18 центнер ыраш пуçтарса кĕртрĕ. Иван Лисов ертсе пыракан бригада хăйне уйăрса панă пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 16,3 центнер ыраш, 16 центнер пăрçа, 14,5 центнер урпа пуçтарса кĕртрĕ.

Çав вăхăтрах Н. Викторов, А. Житков, П. Сергеев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем тыррул тухăçлăхне сахал ÿстерчĕç.

Колхоз выльăх-чĕрлĕхĕрен пулакан тислĕке çуррине те ун кăларăймасть. Бригадирсем ... те тислĕк нумай. Вĕсем ăна колхоз ... парасшăн, анчах ку тĕлĕшпе правлени нимĕн те тумасть. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухассине те нимĕн йĕркелемен.

Техникăллă культурăсем акса тĕвăс ĕçе вăйлатмалла. Кăçал кок-сагыз тымарне гектартан 4 центнер çеç туса илнĕ. Техникăллă культурăсене минераллă тата вырăнти удобренисемпе питех те сахал апат панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те çитменлĕхсем чылай. Выльăхсене шăварассине япăх йĕркеленĕ. Вĕсене ферма территорийĕнчен пĕр çухрăмра тунă пĕвене кайса сивĕ шывпа шăвараççĕ. Çулла кунта ферма умĕнех цĕве пĕвелеме йышăннăччĕ, анчах колхоз правленийĕ вăл ĕçе пурнăçлама кирлĕ мерăсем йышăнмарĕ. Çав пĕвене тунă пулсан, фермăна водопровод та кĕртме çăмăлччĕ.

Правлени хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине тимлĕ пăхмасть. 1945 çулта 10 çемье пулнă пулсан, паянхи куна та çав 10 çемье çеç. Хуртсене М. Ефремова колхозница пăхать. Вăл хăй ĕçне лайăх пĕлет. Анчах вĕллесем çук пирки хуртсем сăвăр кĕнĕ вăхăтра, вĕсене тытса хума вырăн çук. Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе лайăх майласан, пĕрлешÿллĕ хуçалăх çулсерен вунă пин тенкĕ тупăш илме пултарать.

Колхоз кашни çулах урапасем, çунасем илсе пысăк тăкак тăвать. Асăннă япаласене илме иртнĕ икĕ çул хушшинче 13.425 тенкĕ укçа пĕтернĕ. 1945 çулта кунта урапа кустăрми çапакан, çуна тунăкан ... мастерской йĕркеленĕччĕ. Халĕ вăл ĕçлемест. Унта мастерсем нумай, вĕсен ĕçне йĕркелемелле кăна.

Вăрмаи—колхоз çумĕнчех, ... мар. Ĕффрĕрн Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем иртнĕ çулта 90 тонна курăс касрĕç, ăна сутса кăна 360 пин тенкĕ тупăш илчĕç. «Гигант» колхоз вара курăка илсе ... пин тенкĕ укçа пĕтерет.

Строительство материалĕсене перекетлес тесен, савăт кирпĕч тăвас ĕçе йĕркелеме май пур. Строительство бригади членĕсем савăта ... тунипе курма Вăрмаиккри Хрущев ячĕпе тăракан колхоза кайса курнă, вĕсем пурте савăт кирпĕч тăвас ĕçе пуçарасшăнччĕ, анчах правлени енчен пусăру пулман пирки строительство бригади членĕсен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕмерĕ.

Мăнъял çыранĕсенче кирпĕч тума тăпăр тата тăм пур. Строительство инженерĕсем калани тăрăх, кунта пек кирпĕч тума юрăхлă тăпра ... тыраро та çук. Чылай ял çыннисем халĕ те астăваççĕ-ха: 1920—1922 çулсенче кунта кирпĕч заводĕ пулнă, унта ял çыннисем ĕçленĕ. Мăнъялсем кирпĕч тума çĕр вăхăтра тытăнса пăхрĕç: 1948 çулта кирпĕч çапакансен бригадирĕ С. Коклев юлташ пĕччен темиçе çĕр кирпĕч çапрĕ. Колхоз правленийĕ те, ялти парторганизаци те ку ĕçпе сахал интересленчĕç, пуçланă ĕçе малалла тумарĕç. 1951 çулта кÿршĕри Хрущев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем темиçе çĕр пин кирпĕч çапса хучĕç, ăна тенкĕ тупăш курчĕç, мăнъялсем вара кирпĕч илсе укçа нумай пĕтерчĕç.

Хушма хуçалăхсен туянни ĕç вăйĕпе тулăйĕн усă курма май памасть. Çулла ĕçленĕ колхозниксенчен 50—60 проценчĕ хĕлле ĕçлеме пултараймасть.

Асăннă ĕçсене йĕркелесен, «Гигант» колхоз хуçалăхĕ хăвăртрах вăйланма пултарать.

А. ВИКТОРОВ.

„Тарас Шевченко“ кинофильм чăвашла

«Тарас Шевченко» кинокартинăри кадр.

Чăвашла куçарнă «Тарас Шевченко» картинăна пуçламăш хут Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозра кăтартрĕç. Унта картинăри рольсене чăвашла вылянă артистсем те пынă.

Колхоз клубĕ. Стена çинче аслă Ленинăн сăмахĕсем: «Кино—мĕнпур искусствăсенчен чи лайăх, чи массăллă искусство пулса тăрать».

Залра çутă сÿнет те кино пуçланать. Малтанхи кадрсем курăнсанах, пĕри сассипе:

— Чăвашла калаçать!—тесе сăмах хушасăр чăтаймарĕ.

Картина хыççăн картина—пурте çывăх, ăнланмалла. Колхозниксем тимлесе пăхса лараççĕ.

Художество академийĕнче вĕренекен талантлă çамрăк Тарас Шевченко Лермонтова вĕлерни çинчен илтет.

— Йывăр мана, пăчă! Хăвăртрах... хăвăртрах академи пĕтерес те Украинăна вĕçтерес!.. Куçăм ан куртăр çак чаплă сурпсене, чиркÿсене, вăрттăн казематсене, Петрпа Павел крепоçĕсене.

Поэт хăйĕн тăван çĕршывне чунтан юратать. Украинăра ăна савăнса кĕтсе илеççĕ: Шевченкон малтанхи сăввисем пĕтĕм Украина тăрăх саралма ĕлкĕрнĕ. Ĕççыннисем асаплă пурнăçĕ çинчен çырнă сăвăсене юрăсене чухăнсем юрласа йăпанаççĕ. Унăн сăввисенче юррисем эксплуататорсене хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

Шевченко пичченĕшĕсемпе йăмăкĕсем—пурĕ тăватăп—Энгельгард помещик патĕнче асапланса пурăнаççĕ. Помещик поэтăн аппăшне йытăпа улăштарма килĕшнĕ. Аппăшĕ—Ярынă прикащика тем пекех йăлăнать, хĕрхенме ыйтать. Прикащикăн чĕри сивĕ шăр пек: вăл Ярынана ÿкĕтне путă хувать.

Барабаш, Лукашевич панасем чапа тухнă «Кобзарь» авторне—Шевченкона «хăйсен поэчĕ» тăвасшăн. Çавăнпа вĕсем ун умĕнче тилĕ пек йăпăлтатаççĕ, балра патша çемйине тата хăйсене мухтаса сăвă калаттарасшăн. Поэт мухтавлă сăвă вырăнне эксплуататорсене питлесе, çапса хуçакан сăвă вуласа парать. Урса кайнă улпут Шевченкона балран хăваласа ярать.

Поэт халăхшăн тăрăшни, вăл вĕсен нуши-хуйхисене ăнланакан çын пулни патша чиновникĕсене хăратса пăрахнă. I-мĕш Николай патша поэта ссылка вырăнне 25 çуллăха салтака янăлла тăвать. Унта ăна сăвăсем çырма та, картинăсем ÿкерме те чарнă. Куп хыççăн поэтăн пушхирти крепосре йывăр пурнăçĕ пуçланать. Унта офицерсем салтаксенчен мăшкăлласçĕ, куласçĕ.

II-мĕш Александр патша та Шевченкона каçармасть, ссылкăрах хăварать. Революцилле демократсем—Чернышевскипе Добролюбов тăрăшнипе кăна Шевченко ирĕке тухать.

Шевченкона патша ссылки пансене тата ытларах курайми тăвать.

Куракансене кино питĕ хумхантарчĕ.

— Кино куртăм та, ĕлĕкхи салтак пурнăçĕ аса килчĕ,—тет 64 çулхи Ермолай Васильевич Елахов.—Эпĕ патша самапинче салтакра тăватă çул хушши çеç пулнă, унта пĕр ырă кун курмарăм. Офицерсен патакне, мăшкăлне сахал тÿснĕ-и? Хальхи пурнăçа илер. Салтакран çын пулса килеççĕ çамрăксем. Ахальтен мар Совет Çарне—пурнăç шкулĕ теççĕ. Михаил ывăлăм—артиллерист. Вăл хăйĕн çыравĕсенче час-часах вĕренÿ çинчен, хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ÿстерни çинчен çырать. «Тăван çĕршывăн салтакĕ пулма телей килнишĕн эпĕ чĕререн савăнатăп», тет.

Кино куракансем фильма мĕнле куçарни çинчен сăмах тапратрĕç. Фильмра Шевченко сăмахĕсене Чăваш государство академи театрĕн артисчĕ Виктор Родионов чăвашла лайăх, питĕ ăнланмалла каласа пырать.

— Украина халăхĕн аслă поэчĕн Тарас Шевченко рольне фильмра чăвашла каласа пыма тÿрĕ килнĕшĕн эпĕ тем пекех телейлĕ. Вырăсла кинофильмсене чăвашла куçарма май туса панăшăн аслă Сталина чĕререн тав тăватăп, тет вăл.

Фильмри ытти рольсенче сăмахсене чăвашла И. Бочаров, А. Ургалкин, И. Николаев, Г. Фалеев, Н. Терентьев, Р. Ананьева артистсем лайăх калаççĕ.

«Тарас Шевченко» кинокартина сценарине чăвашла Илья Тукташ поэт лайăх куçарнă.

Фильма курнă хыççăн Тарас Шевченкăн çак сăмахĕсем аса килеççĕ:

Ирĕклĕ çемье тусассăн,
Ăшшăн та йăвашшăн,
Аслă çемьере ан манăр
Мана асăнмашкăн.

Çук, халăх манмасть Сире, аслă поэтăмăр. Санăн ирĕке чĕнсе çырнă сăввусемпе поэмусем вилĕмсĕр!

А. ЖИРНОВ.

Завод чысăшĕн

—•—

(ОЧЕРК)

—•—

Зафир Мусин ĕçе кĕни çулталăка яхăн кăна. Унăн ашшĕ комбинатра чылайранпа ĕçлет. Ватă рабочи кăмăлне хуçас темен, вăл ывăлне унăн ывăлне, Зафира, 5-мĕш цеха илнĕ. Малтанлăха вăл пĕлĕкрех ĕç тунă. Халĕ Зафир ăста рабочи, хатĕрленĕ пайсене хăйĕн штампĕпех паллă тăвать. Николай Тимофеевич Сусов, Зафирпа пĕрле ĕçлекен столяр, ăна кăтартса, вĕрентсе пырать.

— Халĕ нормăна тултараймасан намăс. Кур, акă, пирĕн рационализаторсем мĕн туса пачĕç,—тет вăл виçĕ пăра вырнаçтарнă станок çине тĕллесе.— *Эсĕ пĕр пăрапа шăтарса кураймарăн-ха.* Рамăна шăтарас пулсан пăра айне виçĕ хутчен тытмаллӑччĕ. Тăватă кĕтесе—12 хут. Тепĕр чухне, тĕрĕс шăтараймасан,—куç виçипе ăçтан илмелле тĕрĕс пултăр,—пĕтĕм рама брака тухатчĕ, темиçе çын алли витĕр тухнă деталь сая каятчĕ. Халĕ, ак, рама кĕтесси пăра айне шăп пĕр виçепе кĕрсе ларать,—тет те вăл шкафăн аялти рамине хăпăхнă аллисемпе илсе, пăра айне тытать. Курăнми çаврăнса тăракан виçĕ пăра пĕр харăс рама кĕтессине шăтарса кĕреççĕ. Шăп виçеллĕ кĕрет пăра. Рамăна шăтарса тухса, шкафăн виçĕ кĕтеслĕ урн çине тепĕр 35 сантиметр кĕрет. Пуссассăн та урăх аласть, пăрасене çавăн пек вырнаçтарнă. Çавăнпа кунта ытлашши шăтарассинчен шикленмелли çук.

Зафир ĕçе часах хăнăхса çитрĕ. Ăна хăйне штамп пачĕç. Халĕ унăн деталĕсем çине контролер клеме çапмасть. Мĕншĕн тесен ун алли витĕр тухакан рама çинче пĕр кăлтăк та çук. Тĕрĕслеме те кирлĕ мар. Пайсене туса пĕтерет те «№ 6» тесе ÿкернĕ штампне çапать. Ку савăнăç мар-и ĕнтĕ? Зафир та ытти рабочисемпе тайлашрĕ! Танлашрĕ кăна мар, хăшпĕр рабочисенчен те иртсе кайрĕ вăл. Нормăна 200 процент тултаракан пулчĕ.

Ĕç йĕркеллĕ пынă çĕртенех Зафир тапăнчĕ.

— Эй, эсĕ çак деталь çине штамп мĕншĕн çапмастăн,—терĕ ăна пĕррехинче Николай Тимофеевич.

— Мĕн уйрăмĕ пур, хăть çап, хăть ан çап. Пуçлăхсем тек те тума хушĕç. Вăхăт пуçтуй иртет. Эпĕ вăл хушăра тепĕр рама шăтарса илетĕп,—хирĕçлерĕ ăна Зафир.

— Хушаççĕ-тĕк—кирлĕ. Кирлине тăвас пулать.

Темĕн самантран вĕсем патне Семен Яковлевич Чииров столяр пычĕ. Сусов вăл мĕнле шухăшпа килнине куçĕнчен пăхсах пĕлчĕ. Вĕсем тунă деталь ун аллине пырса кĕрет.

— Сирĕнтен тахăшĕ штамп çапмасть. Ырă мар тăватăр,—терĕ вăл.

Зафир хĕрелсе кайрĕ.

— Зафир эсĕ ĕнтĕ. Мĕншĕн ун пек тăватăн?

— Асăрхаман,—терĕ Зафир.—Урăх ун пек пулмасть.

Николай Тимофеевич хăйĕн ученикне сăнама пур-пĕрех пăрахмарĕ. Зафир суйни Николай Тимофеевич кăмăлне хуçрĕ. Ученикĕ ырă мар ĕç тунăшăн вăл та айăплă: вăл ăна вĕрентнĕ, унпа пĕрлех ĕçлет.

Зафир хăй сăмахне пурпĕрех тытмасть. Хушăн-хушăн пур пĕрех штамп çапман пайсем тухаççĕ.—Мĕншĕн капла хăтланать вăл?—шухăшлать Николай Тимофеевич.

Вăл хăй тунă пайсене штамп çапăшшăн, тесе тепĕр хут тĕрĕслесе тухать.

— Ырă мар, Зафир. Кама усал ята кăртесшĕн эсĕ апла? Эпĕ мастера пĕлтеретĕп,—терĕ Сусов тепринче Зафира.

— Ну, пĕлтер. Унтăн тав тăвăç ăнтă сана...—тавса хучĕ ăна Зафир.

Темиçе кунтан Зафира цех начальникĕ патне чĕнтерчĕç. Начальник сĕтелĕ çинче шкаф урн выртать. Шăп та пăп ун алли витĕр тухнă пай. Ăна курсанах Зафир хăйне мĕншĕн чĕннине тавçăрса илчĕ. Эх, кăна пĕлнĕ пулсан?.. Астăвать Зафир вăл мĕнле кайнине. Ун чухне «Большевик» завод пăс шăмарĕ. Петра сивĕ пулнă пирки пукан урине рама сумне çирĕплетнĕ çилĕр çырĕп хытман. Çавăнпа шăтарса шкант çапма хатĕрленĕ рамăсенех браклаламалла пулчĕ. Çыпăçтарнă урисене хăйпăтса çĕнĕрен çирĕплетсе пресс айне хучĕç. Пресс айĕнчен тухсан, вĕсене малтанхи йĕрпе çĕнĕрен ярса шăтармаллаччĕ те шкант çапмаллаччĕ. Анчах Зафир вăл рамăсене пăра айне çĕнĕрен илсе каймарĕ. Шкантне рама çине мĕн кĕнĕ таран çапрĕ те, илнĕ пайне тата пăрахрĕ. Çапла вара шкаф урн çăлĕн çинче кăна тăрса юлнă. Конвейертан тухсан, куçарнă чухне, вăл хăйпăнса кайнă. Ак халĕ вăл начальник сĕтелĕ çинче выртать.

— Сан?—ыйтрĕ цех начальникĕ Зафир çинчен куçĕсене илмесĕр.

Зафир хăюлăх çитерейменрĕ, хăраса ÿкрĕ.

— Астумастăп, эп ун пек нихçан та яманччĕ,—ярса сăмах тупса ответлерĕ вăл.

— Сусова чĕнĕр-ха,—хушрĕ начальник пĕр нормировщика.

— Эпĕ ăна штамп çапма темиçе те каланă,—терĕ Сусов,—хăлхана та чикмерĕ.

— Шкант кĕмен-çке, юлнине мĕн турăн? Урине пăра ĕмен вĕт-ха,—начальник шкаф урине тытса уйăрăлса кайнă тĕле кăтартать.

Цех начальникĕ Зафир Мусина штампне илчĕ.

— Акă ырра хăвăн патăнтĕсене илсе пăх,—терĕ вăл Зафира куçĕсене ăсатса ярса.

Тепĕр кунне касса саманта Зафир Мусина пулăпа чĕнчĕç.—Кайнастăп,—терĕ вăл ăнĕнчи.—Паллах, ăнерлавшăн.—Пана унăн юлташĕсен умĕнче ответ тытмалла. Мĕн тес? Мĕн-ха эпĕ ÿркентĕм-ха ун чухне. Эх, пăхса çывăх та...

Зафира тепĕр хут пырса чĕнчĕç.

Вăл пырса кĕнĕ чухне хĕрлĕ сĕтеле халăх тулнă пулнă. Акă, вĕсем—юлташсем, çамрăксем—Зафир юлташĕсем, клеенка саппунĕсемпе илнĕ, хăшпĕрин инструменчĕсем те ывăçĕнче. Ку—Надежда Ивановна Романова мастер пулать. Президиумри сĕтелле хушшинче цех начальникĕ, профгрупорг, комбинатри партбюро секретарĕ. Сĕтел çинче каллех çав çĕтмен шкаф урн. Зафир пырса кĕнине никам та асăрхамарĕ тейĕн. Пĕри те ун çине пăхса илмерĕ.—Пурне те паллă,—асрĕ ун пуçĕнче. Рабочисен сĕтел умĕнче тăракан ватăрах рабочи çине тинкерчĕ. Ку—Сергей Петрович Пумбросов. Вăл та коллектив умĕнче айăпа кĕнĕ пек. Ĕмĕр хăрпне çапмалли шăтăка чалăш шăтарнă иккен.

— Асăрхаман. Мĕнле пулчĕ вăл, тавçăраймастăп. Нихçан кун пек пуламаччĕ. Юлташсен умне аптăтăнччĕ. Юлташсем,—терĕ вăл ÿпĕтленĕ сасăпа куç илмесĕр ларакан рабочисем енне çаврăнса. Хăйĕн ещĕк тытнă алли чĕтрет, ăна Зафир пăхăлах асăрхарĕ.—Эпĕ, ватă рабочи, сирĕн умра намăс куртăм. Намăс-симĕсĕ тата айăпа кĕтĕм. Кăмăла питĕ йывăр. Вĕрет ман çакăнга,—тет вăл хăрах аллине чĕри патне тытса,—чĕтрет... Малашне икĕ-виçĕ шкаф тытса тăрăп—кун пек пулмасть. Хисепрен тухрăм пулассăн та—каçарăр...

— Хисеп ĕçпе килет вăл. Чупна парса ĕçлени яланах хисеп,—терĕ ăна партбюро секретарĕ.

Пумбросов хăй вырăнне кайса ларчĕ.

— Мусин!—чĕнсе илчĕç Зафира сĕтел умне.—Ĕç мĕнле пулнине каласа кăтарт юлташусене.

Зафир пуçне усса сĕтел умне тухрĕ. Рабочисен куçĕсем ун çине тĕллерĕç. Ниçта кайса çĕтмелле. Тен. вĕсен куçĕсенчен пăрăнма çук: рабочисен пулĕм йĕри-тавра... тухнă. Вĕсене кашни кун куратăн, пĕрле ĕçлетĕн. Сунна пăхнине куçранах кураççĕ. Тĕрĕссине калама йывăр. Зафир куç умне Пумбросовăн ылли мĕнле чĕтрени килсе тухрĕ.

— Пĕртен-пĕр хут пулчĕ мана. Урăх нихçан та ун пек тумастăп,—терĕ Зафир аллинчи картусне пăчăртаса. Унăн сасси те урăх илтĕнчĕ. Мана ыйтусем çине вăл пăт-пат ответлемелерĕ те, ăна ларма хушрĕç.

— Юлташусене илтесе рăх-ха эппин,—терĕ ăна цех начальникĕ Иван Васильевич Ковыров.

Вырăнтан Борис Романычев столяр çĕкленчĕ.

— Пăхма пĕчĕк ĕç, юлташсем. Совет çынни, ку шкафа илнĕ пулсан, мĕн калатчĕ вăл пире? Эпир пурте чуна парса ĕçлетпĕр, цеха мала кăларассишĕн тăрăшатпăр. Эсĕ мĕн тăватăн, Зафир? Пыршăнна йывăр, намăс. Мĕн сана укçа çитмест-и? Укçине илетĕн, укçа паракании—государствăна улталама пăхатăн. Пирĕн хушăра коллектив ятне яракан ан пултăр. Эпĕ администрацине çакăн пек сĕнÿ паратăп: пĕр уйăхлăха Мусина урăх, пĕчĕкрех ĕçе куçарас. Ан тив, пĕр хушă пирĕн коллективран уйрăм ĕçлесе пăхтăр.

Кăна илтсен Зафир чĕри кăртах турĕ.

— Ачи çамрăк, сасартăках çапса хуçас мар, вĕренĕ, тен,—терĕ рабочисенчен тахăшĕ.

— Кунта, юлташсем, çамрăк тесе тăмалла мар,—тет аслă мастер Михаил Петрович Плетешков.—Шкаф тума калакан кашни пусшăн кĕрешетпĕр. Çав хушăрах государство укçине усăсăр пĕтерессе пăтне илсе пыратпăр.

Мусин ун çине тĕлĕнсе пăхса илчĕ.

— Ак Хусантан партбюрона çыру килчĕ,—калать малалла Плетешков.—Аллăти ещĕк хупăнмасть,—пĕлтерет çыру яракан.—Пирĕншĕн вăл нимĕн те мар. Вăл çыншăн вара ку ĕç йывăрлăх. Дирекци мана Хусана ячĕ. Çитсе çыннине шыраса тупрăм. Ак ăçта вăл хĕрелмелле пулчĕ. Мана магазина илсе кайрĕç. Унта шкаф тунинă ытти çынсем тĕл пулчĕç. *Манăн та хупăнмасть, теççĕ* пĕрин хыççăн тепри. Кашнин патне çитмелле пулчĕ. Пĕр енчен комбинат чысĕ, тепĕр енчен—командировка расхочĕ. Владивостокра пулсан—унта та каяс пулатчĕ вĕт-ха.

Сăмах ят тиврĕ Пумбросовпа Мусина. Хăшĕсем—урăх ĕçе куçарас, теприсем—çирĕп асăрхаттарас та вырăнтах хăварас, терĕç.

— Костюмăн хăрах çухавĕ чалăш пулсан, илетĕн-и эсĕ ăна,—ыйтрĕç хăшпĕрисем Мусинтан.

— Ну, паллах, илместĕп.

— Кĕпе тÿми вăхăтсăр татăлсан та эпир кÿренетпĕр,—хушса хучĕç теприсем. Шкаф кĕпе мар. Тар тăкса илнĕ укçапа унăн лайăх япала илес килет.

Зафира урăх ĕçе куçармарĕç. Хăй вырăннех хăварса штампне те пачĕç.

— Ну, йыш умне тухасси. Шăтăка анса кайăттăмччĕ. Приказ çырнă пулсан, пин хут çăмăлтарăх пулнă пулĕччĕ. Чĕренех ларчĕ ку. Каçар эсĕ, Николай Тимофеевич, хытăрах та калăрăм пулĕ сана...

Пасăр сăмах хушма вăй çитмен Зафирăн тасран виç-тăватă хут ытларах вăй хутшăннăн туйăнчĕ. Вăл рамăпа çăмăллăн станок çине илсе хучĕ те рубильникне пусрĕ. Станок кĕрлевĕ цехра çĕр тĕрлĕ шавпа пĕрлешсе кайрĕ.

Е. АФАНАСЬЕВ,
Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ.

Тĕнчери лару-тăру

ГОМИНДАН ЭЛЕКĔ ХЫÇĔНЧЕ МĔН ПЫТАНСА ТĂРАТЬ

США тăрăшнипе ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕн кун йĕркине гоминданăн Совет Союзĕпе Китай Халăх Республикине хирĕç элеклекен çыррăвне пăхса тухас ĕçе кĕртнĕ. Ку элеке Ассамблейăра пăхса тухма виççĕмĕш хут ĕнтĕ сĕнеççĕ. Совет делегацийĕ гоминдан элекне пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларнă, ăна провокациллĕ ĕççем тăвас шутпа юриех шухăшласа кăларнине палăртнă. Çапах та Вашингтонри правительсем — гоминдан шайкине хÿтĕлекенсем лăпланмаççĕ. Вĕсем çав элекпе хăйсен Инçет Хĕвелтухăçĕнчи агрессиллĕ ĕçĕсене пытарса тăрас ĕçре усă курма пур майсемпе те тăрăшаççĕ.

Гоминдан элекĕнчи тĕп шухăш çапла: гоминдан Совет Союзне айăплама кулăшла сăлтав кăларса тăратнă, гоминдан шайки Совет Союзне Китайпа ССР Союзĕ пĕр-пĕрипе 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕнче тунă договора «пăснăшăн» айăплама хăтланать. Гоминдан правительстви арканса кайнă хыççăнах çÿлте асăннă договор пăрахăçа тухнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Вăл договора Китай хăех, Китай халăхĕн центральнăй правительстви пăрахăçланă. Ку правительство ССР Союзĕпе 1950 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче туслă, союзлă пурăнасси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор тунă.

Гоминданăн çак элекне Совет Союзĕпе Китай Халăх Республики çинчен юриех элеклесе çырнăскере, çĕнĕрен çут тĕнчене туртса кăларни США правительствине мĕн тума кирлĕ пулнă-ха? Çак ĕçе гоминдан шайкинчен тăрса юлнă пĕчĕк ушкăна, ООН-ра законсăр майпа вырăн йышăнса тăраканскере, хÿтĕлес шутпа тунă. Чан Кай-шин пăнтăхса çĕрнĕ власне Китай халăхĕ сирпĕтсе антарман пек кăтартас, ăна урăх çĕршыв хутшăннипе пула сирпĕтсе антарнă пек кăтартас шутпа тунă. Америка империалисчĕсем Генеральнăй Ассамблейăра ытти киревсĕр тата кăнттам маневрсем тăваççĕ. Çав вăхăтрах Америка империалисчĕсем хăйсем Китай Халăх Республикине хирĕç агрессиллĕ ĕçсем тума шутланине пытарса тăма тăрăшаççĕ.

Нумай пулмасть Вашингтонра США, Англи тата Франци штаб начальникĕсен канашлăвĕ пулнă. Çав канашлăва ирттернинчен империалистсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азире тата Инçет Хĕвелтухăçĕнче хăйсен агрессине сарас тĕллев тытни уççăнах палăрнă. Труменпа Черчилль тĕл пулса калаçнă чухне те çав ыйтусене хускатнине, вĕсем çинчен сÿтсе явнине вăт çĕршывсен хаçачĕсем пытарса тăмаççĕ. Корейăри вăрçа, тен, Китая хирĕç çапăçмалли вăрçă туса ярĕç, тесе Америка хаçачĕсем уççăнрах та уççăнрах çыраççĕ. «Уолл-стрит джорнал» хаçат: «Китай çине бомбăсем пăрахасси тата ăна тинĕс енчен хупăрласа тăрасси вăл Корей çурма утравĕ çинчи вăрçа тата анлăрах сарни пулĕ», тесе çырать. Штаб начальникĕсен пĕрлештернĕ ушкăнĕн председателĕ Брэдли генерал та журналистсене çав шухăша каласа панă. Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Брэдли генерал çапла каланă: Корейăри каллĕсем «ăнăçлă вĕçленмесен», малашне мĕн тумаллине палăртса хунă, «хатĕрлесе çитернĕ» плансем пур, тенĕ.

Америкăри çĕнĕ вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсем Китая пусмăрлăха кĕртсе ÿкерес шĕн. Вĕсем хăйсен Китая пусмăрламалли планĕсене пăрахăçлама шутламаççĕ. Вĕсем Китай территорийĕ пулса тăракан Тайван утравне хăйсен аллине çавăрса илнĕ, Китайран тытса илнĕ. Унта вĕсем хăйсен çар базине тунă. Вĕсем Чан Кай-ши çарĕн Тайван утравĕ çине тарнă юлашки ушкăнĕсене ухçа парса пулăшаççĕ тата çар ĕçне вĕрентеççĕ. Ку çар чаçĕсене Китайăн кăнтăр енчи чиккисем çывăхне, Таиланда тата Бирмăна яраççĕ. Китай Халăх Республикине хирĕç çапăçа ва кĕртсе има хатĕрлеççĕ. Рангун хулинчен «Дейли мейл» хаçатăн корреспонденчĕ «Чан Кай-ши çарĕсене Бирма чиккине пухни» çинчен пĕлтерет.

Гоминдановецсен Бирмăра хăйсен аэропорчĕсем пур. Вĕсен çар чаçĕсем Америка офицерĕсене пăхăнса тăраççĕ. Бирмăн официальнăй представителĕ «Бангкок-пост» хаçатра пичетленнĕ статьяра Бирма территорийĕнче 10.000 гоминдановец тăни, вĕсем Китайăн Юньнань провинцине чикĕ çывăхĕнчи вырăнсене час-часах тапăнни çинчен пĕлтернĕ.

Юлашки вăхăтра Тайван утравĕ çине Америкăн нумай генералĕсемпе адмиралĕсем пырса кайнă. Унта США-н Рюкю утравĕ çинчи çарĕсен командующийĕ Бейтлер, США-н тинĕс çарĕнчи авиаци чаçĕсен 20-мĕш соединенийĕн командующийĕ Стирли, 7-мĕш флот командующийĕ Мартин пулнă. Вĕсем пурте Чан Кай-шипе çар ĕçĕсем пирки калаçнă тата гоминдан çарĕсене Китай чиккисем çывăхне илсе каяс ĕçре пулăшнă.

Анчах США империалисчĕсем кирек мĕнле маневрсем тусан та, вĕсем Китай Халăх Республикине хирĕç хăйсем агрессиллĕ ĕççем тунине пытарса тăма тем тĕрлĕ тăрăшсан та, вĕсем тĕнчери общественноçа улталама пултараймĕç. Çĕнĕ вăрçă пуçарма тăрăшакансем мĕнле ĕççем тума хатĕрленнине мире юратакан халăхсем хытă асăрхаса тăраççĕ. Мире юратакан халăхсем вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен агрессиллĕ, преступникла планĕсене путлантарса лартассишĕн кĕрешме хатĕр.

РУМЫНИРЕ УКÇА-ТЕНКĔ РЕФОРМИ ИРТТЕРНИ ТАТА ТАВАРСЕН ХАККЕ ЙÜНЕТНИ

Румыни Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕпе Румынири Рабочи партийĕн Центральнăй комитечĕ çак кунсенче укçа реформи ирттересси тата апат-çимĕçпе куллен кирлĕ таварсен хаксене йÿнететесси çинчен постановлени йышăннă. Постановленире палăртнă ĕçсене пурнăçлани вăл Румыни пĕрмаях ÿсе пыракан экономики малалла аталанассине палăрă тапхăр пуçса тăрать тата халăх демократи строй малалла тĕреклене пынине кăтартса парать.

Лей хакне тĕнчери чи çирĕп халăл укçапа — совет тенкипе танлаштарса тунă (2 лейпа 80 бань пĕр тенкĕ хакĕ чухлĕ тăраççĕ). Укçа реформине ирттерни лей хакне çирĕплетет, ăна ылтăнпа шутласа хисеплес ĕçе йĕркене кĕртет.

Апат-çимĕçпе куллен кирлĕ таварсен хакĕсене 5—20 процент таран чакарнă. Çакна пула халăх 10 миллиард лей ытла усă илет, ку хисепе халăх пасарти хакăсем йÿнеленĕ пирки усă илни кĕмест.

Государствăн 1949 тата 1950 çулсенчи планне пурнăçланипе Румыни промышленноçĕ 1948 çулхинчен икĕ хут çурă нумайрах продукци туса кăларма пуçланă, промышленствӑ пайĕ вăрçă умĕнхи вăхăтринчен нумай иртнĕ. Икĕ çул хушшинче çĕршыва индустриализацилес енĕпе капитализм вăхăтĕнче 25 çулта туниччен те нумайрах ĕç тунă.

Иртнĕ çулталăкра республика çĕнĕ çитĕнÿсем тума пултарнă: пилĕк çуллăх планăн пĕрремĕш çулти программине ăнăçлă пурнăçланă. 1.200 предприяти ытла çулталăкри планĕсене 11 уйăх хушшинче пурнăçланă, планран ирттерсе çĕршер миллион лейлăх продукци туса кăларнă. Промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем ĕçленĕ: виçĕ фабрикăсемпе заводсенчен çĕр предприяти ытла юсанă тата урăхласа çĕнетнĕ. Çакна пула промышленность производстви малалла ÿсре пынă.

Елĕк Румынире машиностроени промышленноçĕ пулман. Юлашки çулсенче унта машиностроени предприятийĕсем тунă, пысăк пахалăхлă турçă шăратса кăларма, хăватлă дизельсем, нефть оборудованийĕ, тракторсемпе комбайнсем, тинĕспе юханшыв карапĕсем туса кăларма тытăннă. Иртнĕ çулталăкра кăна республикăри предприятисенче çĕр тĕслĕ ытла çĕнĕ йышши продукци туса кăларма вĕренсе çитнĕ.

Çĕршыври ĕççынписем пысăк предприятисем лартас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Сăмахран, В. И. Ленин ячĕпе тăракан гидроэлектростанци, Дунай юханшывĕпе Хура тинĕс хушшинче канал тăваççĕ. Пилĕк çуллăхра халăх пурнăçĕ чылай лайăхланать. Çĕнĕ шкулсем, клубсем, театрсем, больницăсем лартаççĕ.

Халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕк çуллăх плана пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçленĕ вăхăтрах, ĕççыннисем çĕршыва электрификацилемелли плана та пурнăçласа пыраççĕ. Çав плана пурнăçласа çитернипе электричество энергийĕ туса кăларасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, тăватă хут ÿсет.

Румыни Халăх Республикин правительстви çултан-çул ялхуçалăхне нумайрах та нумайрах машинăсем парать. Çакă вара ялхуçалăхĕнче коллективлăн ĕçлемелли тата малта пыракан агротехникăна пурнăçламалли хуçалăхсем, шутра çĕрĕç хуçалăхĕсем туса хума май парать.

Совет Союзĕ пулăшнипе Румынири ĕççыннисем, социализм никĕсне ăнăçлă хывса, хăйсен пурнăçне тăтăш лайăхлатса пыраççĕ, çакăн çинчен укçа-тенкĕ реформи ирттерни тата тавар хакĕсене йÿнетни калать.

ГРЕЦИРЕ ВЛАÇСЕМ ТЕРРОРЛА ĔÇСЕМ ТĂВАÇÇĔ

Греци агрессиллĕ Атлантика блокне хутшăнтарма хăтланса, Америка империалисчĕсем Греци демократиллĕ вăйĕсене хытă хĕсĕрлеççĕ. Грецири демократиллĕ вăйсем хирĕç тăни США империалисчĕсене хăйсен агрессиллĕ планĕсене пурнăçлама нумай чăрмантарать.

Вашингтонран хушнипе Афинăри влаçсем демократсене арестлеççĕ, демократиллĕ организацисене хĕсĕрлеççĕ, халăх влаçĕсене тата американецсен пуç пулса тăнине хирĕç тăракансене, [illegible] Греци [illegible] сулпа [illegible] пуçараççĕ.

Юлашки вăхăтра Пластирасăн Венизелос правительстви Сулахайри демократиллĕ пĕрлешÿллĕ партие (ЕДА) хытă хĕсĕрлеме тытăннă. Çав партин представителĕсем парламентра та, унăн тулашĕнче те правительствăн терорла политикине, çĕршыва Америка империалисчĕсене пăхăнтарас политикăна хирĕç активлă кĕрешеççĕ. Ваççĕн демократиллĕ пĕрлешÿллĕ партин «Демократикос» хаçатне тата партин тăракан çавăрăмсен «Фруги тис ирини» хаçатне кăларма чарнă, парти лидерĕсене — Гавриилидиса Иливротиса арестленĕ.

Греци влаçĕсем хĕсĕрлеме хирĕç протестлеме çĕршывра пысăк общественность çĕкленнĕ. Грецири демократиллĕ тĕрлĕ организацисем Пĕрлешнĕ нацисен организацине, Пĕтĕм тĕнчери Мир Советне, Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине тата тĕнчери çĕршывсен ытти организацийĕсене çыру янă. Çав çырура Афинăри правительство çынĕсем терорла ĕçсем тунине Греци халăхне тăрăхлатни [illegible] палăртаççĕ. Çыру авторĕсем Пластирас правительстви çынĕсем ытти хаяр терорла ĕçсем тума [illegible], çав ĕçсене Америка империалисчĕсем хушса тăнине туни çинчен çыраççĕ. «Грецире çынĕсен демократиллĕ йĕрке, ирĕклĕ пурăнмалли йĕрке тума» ыйтаççĕ.

Америка империалисчĕсене мирĕ пулас шутпа Грецири влаçра тăракан ушкăнсем суйлав умĕн хăйсен халăха [illegible] сăмахсене пăсаççĕ, вĕсене пурнăçламаççĕ. Конституцие хирĕç пырса, Греци влаçĕсем демократиллĕ организацисен парламентри депутачĕсен, çав шутра Гавриилидиса Иливротис депутачĕсен мандачĕсене пăрахăçланă, халăх парламенчĕ, суйлавçă çав çынсене халĕ влаçĕсем хытă хĕсĕрлеççĕ.

Анчах, влаçсем çĕршывра терорла ĕçсем тăваççĕ тата хытă хĕсĕрлеççĕ пулин те, Греци патриочĕсем мирпе демократишĕн, Америкăн Грецири оккупанчĕсене, Греци пĕтĕмлĕх пурнăç патне илсе çитерни оккупантсене хирĕç пур вăйĕсемпе те кĕрешеççĕ.

Д. БОЧАРОВ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

„ООН урлă мир тумалли 20 çуллăх программа“ США-н агрессиллĕ планĕсене пытарма хăтланни

ПАРИЖ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян ООН Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕнче «ООН урлă мир тумалли 20 çуллăх программа» текенскере пăхса тухма тăратнă. Ăна ООН генеральнăй секретарĕ вырăнĕнче законсăр йĕркепе ĕçлекен Трюгве Ли тăратнă.

Докладра пĕтĕм тĕнчерĕ хăрушсăрлăх тăвасси, Пĕрлешнĕ Нацисен организацине çĕнĕ членсем илесси, вăйсăр çĕршывсене техника енĕпе пулăшасси çинчен, ООН атом прависем пирки тата тĕнчери çĕршывсен прависене аталантарас пирки тунă ĕççем тата ыттисем çинчен икĕ пирленсе каланă сăмахсем тем чухлех. Анчах, чăннипе, Трюгве Ли доклачĕ вăл ООН ячĕпе тата унăн алăвĕпе витĕнтерсе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен влаçра тăракан ушкăнĕсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пытарса тăрас ĕçре усă курмалли пысăк программа.

Доклад авторĕ ятнех Совет Союзĕн сĕнĕвĕсем — совет делегацийĕ ООН-ра пăхса тухма тăратнă тата чăннипех те пĕтĕм тĕнчере вăрах вăхăта мирпе хăрушсăрлăх тума май паракан сĕнÿсем çинчен нимĕн те çырман. Çапла тунипе Трюгве Ли халĕ Америкăра влаçра тăракан ушкăнсене чура пекех пăхăнса тăнипе тата вăл мир ĕçĕшĕн мар, çĕнĕ тĕнче вăрçи хатĕрлессишĕн тăрăшнине тепĕр хут кăтартса панă.

Çакăн пек икĕ питлĕ документа тăратнă хыççăн Гаити, Канада, Колумби, Ливан, Пакистан, Филиппин, Чили, Швеци тата Югослави делегацийĕсем хăйсен пĕрле хатĕрленĕ резолюци проектне тăратнă. Унта Генеральнăй ассамблейăна Трюгве Ли докладне ырра тытма йышăнма сĕннĕ. Çав вăхăтрах резолюци проекчĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн тивĕçлĕ органĕсене ку докладăн уйрăм пайĕсене «пăхса тухас ĕçе малалла туса пыма», ку ĕçре мĕнле результатсем пулни çинчен Генеральнăй Ассамблейăн çиччĕмĕш сессийĕне пĕлтерме хушать.

Англи, Норвеги, Чили, Голланди тата Америка делегачĕсем ытти чылай çĕршывсен делегацийĕсем Трюгве Ли докладне тата тепĕр делегация резолюци проектне мухтанă. Вĕсем хыççăн СССР делегачĕ Соболев сăмах илнĕ.

Вăл «ООН урлă мир тумалли 20 çуллăх программа» текенскере критикăланă, унта чăннипех те калăсем хушшинче мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетме пулăшмалли нимĕнле сĕнÿ те çуккине кăтартса панă.

Докладра, сăмахран, ООН хăрушсăрлăх коллективлă хÿтĕлесси çинчен калакан пай пур, тенĕ Соболев. Çав пайра США-н Корейăри агрессине «хăрушсăрлăх коллективлă хÿтĕлес» тĕлĕшпе тунă ĕç пек кăтартнă. Çав агрессие докладра «вăл атом çĕр çинче мирлĕ ĕмĕр тăвассишĕн кĕрешес ĕçре пулнă питĕ пысăклă уçăмлă тĕслĕх» пулать, тесе каланă.

Пысăк енчĕ, çакăн пек каланипе хăрушсăрлăха коллективлă хÿтĕлемелле тăвас шухăшпа питĕ киревсĕррĕн ыйтăнлăва путлать тесе нимĕн те çук пулать.

Мирлĕ пурнăç тумалли 20 çуллăх программăра «Миршĕн усăллă пĕрлĕх» текен резолюцие тата «коллективлă мерăсем йышăнассине ĕçлекен комитет» текенскерĕн докладне, Генеральнăй Ассамблейăн улттăмĕш сессине тăратакансене, те пĕрлĕ мухтаса пĕтернĕ. Анчах асăннă резолюцие доклад США, Англи тата Франци, ООН-ра хăйсен ушкăнне туса хунăскерсем, законсăр çулпа пынине, ООН Уставне пăснине кăтартса параççĕ. ООН Уставĕпе килĕшÿллĕн тата Уставра çырса хунă пек хăрушсăрлăха коллективлăн хÿтĕлемелли йĕрке тăвас вырăнне Америкăпа Англин агрессиллĕ блокне ерте пыракансем, вĕсем майлă сасăлакансем ООН-ра ытларах пулнипе усă курса, Уставра çырса хунине нимĕн те хисеплемеççĕ, законлă органсемпе юнашар тата вĕсемпе ăмăртакан законсăр органсем тăваççĕ, çав органсене вара законлă органсен полномочийĕсене пăраççĕ, тенĕ Соболев.

Унтан Соболев Политика Комитетĕнче «коллективлă мерăсем йышăнассипе ĕçлекен комитет» текенскерĕн докладне сÿтсе явас ĕç мĕнле пулса иртни çинчен, унта çав «коллективлă мерăсем» текенскерсемпе агрессиллĕ ĕçсене пурнăçлассипе усă курма палăртнине кăтартса панă.

Доклад ытти ыйтусем енĕпе те агрессиллĕ Атлантика блокĕн позицийĕсене хÿтĕленине СССР делегачĕ палăртнă. Çакă вăл хĕçпăшалсене йĕркелес тата атом энергине контроллес тăрас пирки докладра калакан пайра та палăрать. Унта хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарас, атомлă хĕçпăшала чарса лартас, çавсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăма тĕнчери контроль тăвас тĕлĕшпе нимĕнле конкретнăй сĕнÿ те çук.

Лару-тăру çавăн пек чухне «Мир тумалли программа» авторĕ США-н агрессиллĕ политикине çавăрс тата ăна улăштарма сĕнес вырăнне, çав политикăна хÿтĕлет. Çапла вара, «ООН урлă мир тумалли 20 çуллăх программа» пур енĕпе те ырăхсăр.

США хăйĕн Корейăри агрессине чарса лартмасан тата Китай Халăх Республикине хирĕç агрессиллĕ ĕççем тума пăрахмасан, тĕнчери халăхсем хушшинче çирĕп мир тума май çуккине кашни çынах пĕлет. Анчах çав ыйтусем пирки «ООН урлă мир тумалли 20 çуллăх программа» çинчен çырнă докладра та, тăхăр делегацийĕн резолюци проектĕнче те, Ассамблея пленумĕнче пăхса тухма тăратнăскерĕнче нимĕн те шарламан. Çавăнпа та Совет Союзĕн делегацийĕ тăхăр делегаци резолюци проектне хирĕç сасăлать, тенĕ юлашкинчен СССР делегачĕ.

Ку вăл мир плачĕ мар, тенĕ Польша делегачĕ.

Çак сессире мирлĕ пурнăç тумалли чăн-чăн плана Совет Союзĕн делегацийĕ тăратрĕ, унăн çĕнĕ тĕнче вăрçине хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен панă сĕнĕвĕсем чăннипех те мирлĕ пурнăç тумалли плана пулса тăраççĕ.

Юлашкинчен вăл: Польша делегацийĕ тăхăр çĕршыв резолюци проектне хирĕç сасăлать, тесе каланă.

Çав резолюци проектне хирĕç Чехословаки представителĕ те тухса каланă.

Унтан тăхăр çĕршыв резолюци проектне сасăлама тăратнă. Ăна йышăнассишĕн Америкăпа Англи блокĕнчи çĕршывсен делегацийĕсем сасăланă, ăна йышăннă. Ку проекта хирĕç СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсем сасăланă.

Америкăпа Англи блокĕ агресси тесе мĕнле ĕççем тунине шутлама йышăнассине чăрмантарма хăтланни путланса ларнă

ПАРИЖ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Генеральнăй Ассамблейăн паян кăнтăрла пулнă пĕрлехи ларăвĕнче агресси тесе мĕнле ĕççем тунине шутласси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă.

Ку ыйтăва малтан юридически комитетра икĕ эрне сÿтсе явнă. Унта США, Англи тата ытти хăшпĕр çĕршывсен делегацийĕсем агресси тесе мĕне калассине палăртас ĕçе чарса лартма хăтланнă. Анчах вĕсем çакăн пек хăтланнă пĕтĕмпех путланса ларнă. Юридически комитет членĕсенчен нумайăшĕ агресси тесе мĕнле ĕççене шутласси тĕплĕ определени пама кирлĕ, вăл агрессие сирсе ярас тата агрессора наказани парас ĕçре пулăшмалла, тесе каланă.

Юридически комитет йышăннă резолюцие паян Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕнче çирĕплетме тăратнă.

Асăннă ыйтăва сÿтсе явас ĕç Голландипе США делегачĕсем тухса каланипе пуçланнă. Вĕсем комитет йышăннă резолюцие çирĕплетме чăрмантарасшăн пулнă, çав шутпа ытти делегацисене хĕсме пăхнă. Америка делегацийĕн членĕсем лару умĕн те вăрттăн майпа ĕçлесе ку ыйтăва татса парас ĕçре ытти хăшпĕр делегацисене хăй чем майлă çавăрма тăрăшнă. США делегачĕ агрессие определени памалли çинчен калакан резолюцие хирĕç сасăлассине çинчен пĕлтернĕ.

Анчах чылай делегацисем Америка делегацине хирĕç хытă каланă.

Бирма делегачĕ агрессие определени пама пулать тата ăна определени пани кирлĕ, ку вара Пĕрлешнĕ нацисен организацине агрессора хирĕç хăвăрт тивĕçлĕ мерăсем йышăнма май парĕ, тенĕ. Унтан Бирма делегачĕ: хальхи вăхăтра [illegible] Гоминдан çарĕсем пырса кĕчĕç. Агрессие халăхчен определени пама кирлĕ, ку ĕçре тĕрлĕ майлă хаклассăр, тенĕ.

Вăл Бирма делегацийĕ çак ыйтăва комитетра пăхса тухнă чухне сасăлама тытăнса тăни çинчен, халĕ вара пĕрлехи ларăва тăратнă резолюцишĕн сасăлама килĕшни çинчен каланă.

Ун хыççăн США позицине критикăласа тата комитет йышăннă резолюцие хÿтĕлесе Мексика, Боливи, Египет, Сири, Ливан тата Пакистан делегачĕсем тухса каланă.

СССР делегацийĕ мĕншĕн çав резолюци проектне йышăнассишĕн сасăлама килĕшни çинчен Совет Союзĕн представителĕ Морозов сăмах тухса каланă.

СССР делегацийĕ юридически комитет сĕнекен резолюци проекчĕшĕн сасăлать, резолюци проектĕнчи тĕп положенисене тĕрĕс тесе шутлать. Унта пĕтĕм тĕнчере мирпе хăрушсăрлăх тăвас шутпа агрессие определени пама кирли, мĕнле ĕççем тунине агресси тесе шутламаллине палăртма кирли çинчен, агрессие тунине тĕрĕс пек кăтартма мĕнле те пулин сăлтав кăларса тăратма чăрмантарма йĕрке тума кирли çинчен, юлашкинчен, тата ку енĕпе тĕнчери çĕршывсен агресси тунипе тумаллине палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен органне кăтартусем памалли çинчен каланă.

Унтан СССР делегачĕ асăннă резолюцие атемлĕхшĕн мирлĕ пурнăç тата хăрушсăрлăх тăвассишĕн тăрăшакан çĕршывсен делегацисем ырлани, вăл Генеральнăй Ассамблейăн çиччĕмĕш сессийĕнче агрессие определени парас ыйтăва тĕплĕ те ăнăçлă пăхса тухма май парасси çинчен каланă.

Юридически комитет тăратнă резолюци проектне йышăнассишĕн 30 делегаци сасăланă. 8 делегаци хирĕç сасăланă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен делегачĕ те [illegible] 11 делегаци сасăламан.

Çапла вара, США делегацийĕ агрессие определени пама чăрмантарма хăтланни путланса ларнă.

Корейăри ĕççем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЯ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНĔ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле фронтăн уйрăм участокĕсенче оборонăра тăрса çапăçнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ. Çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Муньчхонь, Намхо тата Кансо районĕсене тапăннă, мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

Фельдмаршал Александера Англин оборона министрĕ пулма уйăрса лартнă

ЛОНДОН, январĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци тĕп бюровĕнчен килнĕ хыпар тăрăх, Великобритани премьер-министрĕн канцелярийĕ фельдмаршал Александера оборона министрĕ пулма уйăрса лартнине король çирĕплетни çинчен пĕлтерни. Çĕнĕ оборона министрĕ мартăн 1-мĕшĕнчен ĕçлеме тытăнать. Унччен оборона министрĕн ĕçĕсене премьер-министр Черчилль туса пырать.

АГРЕССИЛЛĔ АТЛАНТИКА БЛОКĔН ТИНĔС-ÇАР ВĂЙĔСЕН ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИЙĔ ПУЛМА АМЕРИКА АДМИРАЛНЕ УЙĂРСА ЛАРТНĂ

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Сурĕр Атлантика союзĕн Атлантика тинĕсĕнчи çар флочĕн главнокомандующийĕ пулма американецсене — Макморрис адмирала суйласа лартни çинчен пĕлтерет.

Тунисри ĕççем

ПАРИЖ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франци колониллĕ пусмăрне хирĕç тата Франци çарĕсем тискеррĕн хĕсĕрленине хирĕç протестленĕ ятпа Тунис халăхĕ паян пĕтĕмĕшле забастовка ирттерет.

«Юманите» хаçат çапла пĕлтерет: Пĕтĕм Тунисри ĕççыннисен союзĕ, Пĕтĕм Тунисри профсоюзсен пĕрлешĕвĕ, «Нео-Дестур» текен парти, Тунисри коммунистсен партийĕ, Пĕтĕм Тунисри çĕр ĕçлекенсен союзĕ тата Тунисри алăстаçăсен союзĕ пĕрле халăха чĕнсе калани пичетлесе кăларнă. Унта вĕсем Тунис халăхне нациллĕ ирĕкĕшĕн пăлханмалăх пама кирли çинчен çыраççĕ.

«Фран-тирер» хаçат Франци çар чаçĕсем Тунис халăхне хытă хĕсĕртни çинчен, карательнăй экспедицисем çапла сÿ[illegible] çинчен пĕлтерет. Полици Тунис [illegible] вĕртсе çунтарса ярать, нумай çынсене арестлет. Полици демонстрантсем çине пăшал тытса пенĕ [illegible] хĕрарăмсем аманнă.

Спорт хыпарĕсем

Профсоюзпа комсомол кросĕ

Февралĕн 1-мĕшĕнче Чăвашоблпрофсоветра Шупашкар хулинчи фабрикăсемпе заводсенчи, учрежденисенчи профсоюз комитечĕсен председателĕсен, комсомол пуçламăш организацийĕсен секретарĕсен тата ирĕклĕ спорт обществисен председателĕсемпе физкультура работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрпе ярăнмалли кросне ирттерессе çинчен сÿтсе яврĕ.

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрпе ярăнмалли Пĕтĕм Союзри кросĕ январĕн 23-мĕшĕнче пуçланчĕ. Анчах Шупашкар хулинче кросс çителĕксĕр иртсе пырать. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри, пирвăр фабрикинчи, Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри, кирпĕч заводĕнчи, электростанцири тата ытти хăшпĕр предприятисемпе учрежденисенчи, техникумсемпе шкулсенчи йĕлтĕрçĕсем халĕ те кроса хутшăнман.

Канашлу физкультурăпа спорт ĕçĕсен хулари комитечĕпе ВЛКСМ хула комитетне тата профсоюз организацийĕсене йĕлтĕрçĕсен кросне ирттерессине халех лайăхлатма, ытларах физкультурниксемпе физкультурницăсене йĕлтĕрçĕсен кросне хутшăнмалла тума йышăнчĕ.

«ИСКРА» СПОРТ ОБЩЕСТВИНЧИ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН ĂМĂРТĂВĔ

Çак кунсенче «Искра» спорт обществинчи йĕлтĕрçĕсемпе конькипе ярăнакансен тата гимнастика тăвакансен республикăри ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Ăмăрту пирĕн спортсменсен пултарулăхĕ ÿснине кăтартрĕ. Йĕлтĕрçĕсенчен 5 çын (18 километра ярăнассипе) спортăн пĕрремĕш разряд нормине тултарнă. Йĕлтĕрпе ярăнассипе çавăн пекех 31 çын иккĕмĕш разряд нормине, 55 çын—виççĕмĕш разряд нормине тултарнă.

Гимнастика тăвас енĕпе педагогика училищисенчи физкультурниксемпе физкультурницăсем ăмăртнă. Гимнастика тăвассипе 1 çын пĕрремĕш разряд нормине, 5 çын—виççĕмĕш разряд нормине тултарнă.

* * *

Январĕн 31-мĕшĕпе февралĕн 4-мĕшĕ хушшинче, Ленинград хулинче, «Искра» спорт обществинчи йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ пулса иртет. Çак ăмăртăва пирĕн республикăри пĕрремĕш разрядри вăйлă йĕлтĕрçĕсем—Михайлов, Кутузов, Вилюнова, Мясникова тата ытти юлташсем—12 çын хутшăнĕ.

ХОККЕЙ ВЫЛЯССИПЕ РЕСПУБЛИКĂРА МАЛА ТУХАССИШĔН

Шупашкарти «Молния» спорт обществин стадионĕнче Етĕрнери «Искра» спорт обществин хоккей командипе Шупашкарти динамовецсем республикăра мала тухассишĕн тĕл пулса выляреç. Вăйăра шупашкарсем 14:1 шутпа çĕнтернĕ.

Виçĕмкун етĕрнесем Шупашкарти «Молния» спорт обществи командипе тĕл пулса выляреç. Вăйăра «Молния» команди 15:0 шутпа çĕнтерчĕ.

КОНЬКИПЕ ЯРĂНСА РЕСПУБЛИКĂРА МАЛА ТУХАССИШĔН

Паян Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионĕнче конькипе хăвăрт ярăнакансен республикăри ăмăртăвĕ пуçланать. Ăмăртăва районсемпе хуласенчен вунпилĕк спортсмен хутшăнать.

ÇАМРĂКСЕН ХОККЕЙ КОМАНДИСЕН КУБОКĔ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ çамрăксен хоккей командисен кубокне илессишĕн ăмăрту ирттермелле тунă.

Çак кубока илессишĕн паян «Молния» спорт обществин стадионĕнче Шупашкарти «Спартак» тата «Молния», «Искра» спорт обществипе Чапаевски поселокри çамрăк спортсменсем тĕл пулса выляççĕ.

Шкулти музей

Ишлейри вăтам шкулта краеведени музейĕ тума тытăнчĕç. Вăл кулленех çĕнĕ экспонатсемпе пуянланса пырать. Музей тăватă пайран тăрать. Унта «Районта ÿсекен çĕр айĕнчи усăллă япаласем», «Чĕрчун тĕнчи», «Ÿсентăран тĕнчи», «Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план» пайсем тунă.

«Ÿсентăран тĕнчи» пайра вырăнта ÿсекен йывăççемпе паллă курăксене кăтартнă.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, февралĕн 3-мĕшĕнче чăвашла çĕнĕ спектакль
«ПУРНАÇА ЮРАТСА»
(Юлиус Фучик)
Ыран, февралĕн 4-мĕшĕнче вырăсла спектакль
«ПОСЛЕДНИЕ»
февралĕн 5-мĕшĕнче вырăсла спектакль
«ИВАН да МАРЬЯ»
Спектакльсем кашни 8 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5 Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-93, ответлă секретарь—4-20, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—5-61, культура пайĕ—5-61, совет строительстви пайĕ—5-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01229 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.